ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

5 (4367) №, 2014, нарăс, 6 (1931 çулхи кăрлачăн 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

ХАСТАР ПЕДАГОГ

## «Çут хĕвел пуль Эсир пирĕн...»

– Валентина Михайловна урокĕнчен чунпа пуянланса тухатпăр...
– Вăл кашни вĕренекене хăйĕн çепĕç сассипе тыткăнлать, кăмăлĕпе пурне те çавăрать.
– Çитес урокра вăл пире поэзи асамлăхĕн тĕнчине илсе кĕрессе эпир чылай малтан туятпăр...



Çак сăмахсем ытахальтен каланăскерсем мар. Вĕсем – Г.Е.Егоров ячĕллĕ вăтам шкулти кашни ачан черчен чĕринчен хăйсен юратнă вĕрентекенĕ Валентина Михайловна Табакова пирки шăранса тухнăскерсем. Çакна савăнса та тулли кăмăлпа итлеме вара питех те хавас.

Мĕнпе илĕртме, вĕренекенсене чĕлхен тата литературăн вĕçĕ-хĕррисĕр анин асамлă хапхине уçса калама çук кăткăс, çав вăхăтрах илĕртӳллĕ тĕнчене илсе кĕме пултарать-ха «Раççей Федерацийĕн пĕтĕмĕшле вĕрентĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ», «Вĕрентӳ ĕçне чунтан парăннăшăн» тата «Раççей вĕрентĕвĕн элити» медальсене чăннипех те тивĕçнĕ педагог?

Паянхи шкул ачи тепĕр чухне учительтен те ытларах пĕлнĕн туйăнать. Çавăнпа эсĕ чăн-чăн вĕрентекен пулсан, санăн унран темиçе хут ытларах пурне те ăнкармалла. Унсăрăн... Ачасемпе çывăх калаçмалла, вĕсене ăнланма тăрăшмалла. Калăпăр, чĕлхери сăмах тытăмне ăнлантарнипе çеç вĕренекенĕн пĕлес туртăмне тытаймăн. Унра «Татах та ытларах пĕлме тăрăшасчĕ-ха ман» текен вучаха вут тивертмелле.

«Çавăнпа та нумай чухне чĕлхе урокĕнче тĕрлĕ тĕслĕхе танлаштарса пăхатпăр, хамăрăн ĕçсене тишкеретпĕр, – тет ачасен юратнă педагогĕ Валентина Михайловна. – Литература нихăçан та кичем мар. Кунта та ачасене çав тĕнчене çул уçса пама пĕлни кирлĕ...»

Калав е повесть, роман е поэма çеç вуласа ларни – кичем пулăм. Произведенин кашни уйрăм сăмахĕ хăй тĕнче пулнине те ăнлантарма тăрăшать тава тивĕçлĕ вĕрентекен. Пĕлĕве çирĕплетме кинофильм пăхма, пушă вăхăт тупса театра килсе кайма та майсем шыраççĕ кунта. Май пулсан театр ăстисене, художниксене йыхравлама та тăрăшаççĕ. Ун пек чухне вĕренни ачара тĕплĕнрех çирĕпленсе юлни куçкĕрет.

Литература урокĕсенче музыка инструменчĕсемпе те усă кураççĕ. Çак меслет ачасене питех те килĕшнине вĕрентекен хаваспах пĕлтерет. «Мĕншĕн-ха вырăс паллă сăвăçин Анна Ахматовăн пултарулăхне тĕпченĕ чухне пианино каласа унăн лирика пуянлăхне кĕвĕпе çирĕплетес мар?» – тет Валентина Михайловна. – Эпĕ пианино умне ларатăп та поэтессăн сăввисемпе хывнă музыка произведенине янраттаратăп. Ачасем те хаваспах итлеççĕ, сăвă-кĕвĕ тĕнчине лекеççĕ...»

Калама çук интереслĕ педагог ачасене хăйĕн чунне парса ĕçленишĕн савăнмалли кăна юлать. Вĕренекенсем вара учительпе чăннипех те мухтанса «Çут хĕвел пуль Эсир пирĕн...» – тесе калаççĕ. Хĕвел пек ăшă кăмăллă вĕрентекен ытларах пулнине вара нимĕн те çитмест. Вĕсенчен пĕри – пурнăçне шкула, пепкисене парнеленĕ Валентина Михайловна Табакова педагог.

***Владимир ФЕДОРОВ.***

Вăрмар районĕ,
Вăрмар.

**Луиза ВАСИЛЬЕВА сăн ӳкерчĕкĕнче:** вĕрентекен «Анна Ахматова лирики – кĕвĕ-çемĕре» темăпа çиччĕмĕш «г» класра урок ирттерет.

## Нарăсăн 1-мĕшĕнчен – малтанхи хакпа

***Хисеплĕ вулакансем! "Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене 2014 çулăн II çурринчен илсе тăмашкăн нарăсăн 1-мĕшĕнчен тытăнса пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен малтанхи хаксемпе çырăнтараççĕ***

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | ÇЫРĂНТАРУ ХАКĔСЕМ | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
| Хыпар | 54800 | 460-86 | 279 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăмат кун | 78353 | 218-22 | 141 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | 54804 | 272-22 | 231 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | 11515 | 243-18 | 213 | 213 | 141 |
| Сывлăх | 11524 | 130-98 | 111 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | 54806 | 122-70 | 111 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | 54838 | 226-62 | 162 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | 43887 | 102-90 | 84 | 84 | 61-20 |
| Тăван Атăл | 11529 | 251-76 | 216 | 216 | 168 |
| Капкăн | 24608 | 122-10 | 105 | 105 | 87 |
| ЛИК (Литература. Искусство. Культура) | 83429 | 127-92 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | 54807 | 220-08 | 186 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | 54847 | 695-88 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | 54802 | 192-18 | 132 | 132 | 90 |
| Самант | 73208 | 155-64 | 156 | 156 | 120 |
| Тетте | 73771 | 119-58 | 111 | 111 | 90 |

***Паянхи кăларăмра:***

**2 стр.**



*Василиса пит сăпайлă, Аня та ялан кăмăллă*

**4 стр.**



*«Тевет» ушкăн хастарĕсем*

**8 стр.**




*Сехетсен çĕр-шывне çул тытар-и?*

# «Эпир текех пĕчĕк мар...»

Комсомольски районĕнчи Тукай шкулĕ çумĕнчи ача сачĕ 2005 çулта уçăлнă. Вун ултă пепке çӳреме тытăннă унта. Паян вара садик сукмакне вун пиллĕкĕн такăрлатаççĕ. Вĕсене Надежда Сергеевна Шурбинапа Елена Гавриловна Муллина куллен ăс параççĕ. Вулама, çырма хăнăхтарнисĕр пуçне ал ĕçĕ тума вĕрентеççĕ.

## Юра Хĕл Мучие юрататъ, Коля чĕрĕпсене хĕрхенет

Ултăттăри Юрий Курицын пĕччен юлсан ялан Хĕл Мучи çинчен шухăшлать.

– Кăçал Çĕнĕ çулта тĕлĕнмелле савăнăç пулчĕ. Шур сухаллă асатте мана юратнăран килти чăрăш айне тетте самолет хурса хăварнă. Шел, хăйне курса тав сăмахĕ калаймарăм. Каçхине эпĕ çывăрнă чухне килсе кайнă çав вăл. Кăнтăрла ман пата çитме вăхăчĕ пулман унăн. Анне каланă тăрăх, вăл çĕр çинчи кашни ачана парнепе савăнтарма тăрăшать.



Çулĕ инçе пулнăран пирĕн пата тӳпене çăлтăрсем тухсан çеç çитнĕ. Садикри елкăра вара урăх Хĕл Мучипе ташласа юрларăмăр. Вăл пире пылак кучченеçпе сăйларĕ, сăвă калакансене пĕрер ывăç канфетпа хавхалантарчĕ. Хĕл Мучипе Юр Пикене питĕ юрататăп, – пăшăлтатрĕ Юра кĕнеке уçса ларнă май.

Унăн тусĕшĕн, Николай Махминовшăн, çут çанталăкра уçăлса çӳресси хăйне евĕр иленӳ. Çуркунне е кĕркунне воспитательсем вăрмана каясси пирки хыпарласан савăнать вăл. «Урра! Уçă сывлăшра çӳретпĕ-ĕ-ĕр!» – тет трăнкки-транкки сиккелесе. Ыттисемпе пĕрле ăмăртмалла чечек тататъ, çулçă пуçтаратъ. Йĕкел пухас ĕçре те тăрăшулăхĕпе палăрать.

– Йĕкелĕсем çĕр çинче ахалех йăваланса выртаççĕ, эпир вара вĕсенчен хитре шăрçасем турăмăр. Çĕнĕ çул елкине те унпах капăрлатрăмăр, – хăй савăнăçне пуринпе те пĕрле пайларĕ арçын ача.

Çуллахи вăхăтра пахчара, картишре, улăхра çӳрекен чĕрĕпсене сăнама юратать вăл.

– Вĕсене хĕрхенсе хам çума тытса ачашлас килет, анчах йĕплĕ «кĕрĕк» тăхăннăскерсене кушак çурипе танлаштараймăн. Çавăнпа тĕкĕнместĕп чĕрĕпсене, пӳрнесене шăтарасран хăратăп. Вара килес çул шкула та каяймăп. Чĕрмеленсе пĕтнĕ аллăмпа епле ручка тытмалла тет манăн? Сас паллисене тетраде çырма таса алă, вĕрентекенĕн сăмахне итлеме çивĕч хăлха кирлĕ. Шкулта лайăх вĕреннисĕр пуçне спортпа çывăх туслашас тетĕп, унсăрăн салтак ретне тăраймастăп. Манăн вара сенкер экранпа кăтартакан паттăрсем пек хăюллă пулас килет, – пĕлтерчĕ хăй шухăшне хастар арçын ача

## Кирила илĕртет пукане, Ярослав кăмăллать «Теттене»

Кирилл Прокопьев шăмат кунпа вырсарни кунсенче садикри тус-юлташĕсемшĕн çав тери тунсăхлать.

– Пĕрле хаваслăрах. Вылятпăр, ӳкеретпĕр. Пирĕн пӳлĕмре сас паллисем çырмалли, чечексем ӳкермелли доска пурри пушшех савăнтарать, – тет вăл кукамăшне ăнлантарса.

Кирилл ытларах хĕр ачасене пулăшма юратать. Тепĕр чух тура илсе илемлĕ прическа туса ярать. Эх, хĕпĕртеççĕ вара лешсем! Тĕкĕр умне хăйсем çинчен кусĕсене илме пĕлмеççĕ.

Машинăсемпе сайра вылять Кирилл, çавăнпа нумай чухне хĕр ачасен ушкăнĕнче вăл. Пуканесен çӳçĕсене тураса якатать е çивĕтлет. «Кăнтăр» вăхăчĕ çитсен вĕсене утьăкка сиктерсе юрласа çывăрттарма та ӳркенмест. Ан шăнччăр тесе ăшă утияпа витет, пуç айне çемçе минтер хурать.

– Садикре питĕ килĕшет. Уйрăмах Таня аппа пĕçернĕ апата çиме юрататăп. Яшки-пăтти, пулли-котлечĕ, чейĕ-компочĕ – йăлтах килĕшет. Чашăк тĕпне пĕр кашăк апат хăвармастăп. Йăлт çисе ямасан Таня аппа кӳренет! Вăл пире тутлипе кăна сăйлас тесе ирех ĕçе килет вĕт. Çитменнине манăн салтак пулас килет. Çӳллĕ те тĕреклĕ салтак. «Апат çимесен санран имшеркке ача çеç çитĕнĕ, ун пеккисене çара илмеççĕ», – асăрхаттарать кукамай та. Аслисен сăмахĕнчен вара эпĕ нихăçан



та иртместĕп, – тет Кирилл шухăшлавлăн.

Сас паллисене паллакан Ярослав Соловьев хальлĕхе сыпăнтарса вулаймасть пулин те «Тетте» журнала курсан сарă хĕвел пекех йăл кулать.

– Сăрламалли те пур кунта! Елена Гавриловна, манăн кăранташсем ăçтарах выртатчĕç-ха? – ăшталанать арçын ача воспитательница патне пырса тăнă май.

– Ак ку сăввисемпе калавĕсене кайран вуласа паратăр пире, юрать-и?

Ярослав çурхи çанталăка кăмăллать.

– Тавралăх типсе çитсен эпир воспитательсемпе пулă яшки пĕçерсе çиетпĕр. Улăхра. Хуранти яшка вĕреме кĕрсенех тавралăха тутлă шăршă сарăлать. Ай, ун пек чухне тутă пулин те, хырăм çав тери выçса каять. Уйра ушкăнпа апат лайăх анать. Çулсем иртсен хам та пулла çӳреме тытăнасшăн. «Эс пĕчĕк-ха», – тесе мана халĕ аслисем пĕве хĕррине пĕччен ямаççĕ. Çавăнпа манăн хăвăртрах ӳсес килет, ан тив, килтисем вăлта илсе паччăр, – хăй ĕмĕчĕпе самантрах палламаштарать ырă кăмăллă Ярослав.

## Саша летчик пулĕ, Аня йăл-йăл кулĕ

Шухăша кайнă Саша Иванов сасартăк ура çине сиксе тăчĕ.

– Надежда Сергеевна, курăр-ха, манăн шăлсем тип-тикĕс те шап-шурă. Ас тăватăр-и, манăн иккĕшĕ çукчĕ. Халĕ çитĕнчĕç. Ыттисене хăваласа çитрĕç. Кун пек мĕнле лайăх! Çулла каллех пĕрин ӳкмелле, кĕркунне теприн. Эй, унăн та хăрама кирлĕ мар. Вĕсем те вăхăчĕ çитсен ӳсĕç, – терĕ вăл воспитательница çине ăшшăн пăхса.



Кăçалхи çул пластилинран тем чухлĕ янавар кĕлетки ăсталарĕ вăл.

– Ахальтен мар. Кăçал лаша çулĕ вĕт. Çитменнине урхамахсене юрататăп. Яланах пластилинпа вылять тесе ан шутлăр. Килтисене те пулăшма кăмăллатăп. Çил-тăманлă çанталăк картише тем чухлĕ юр купаласа лартсан вара манăн пушă вăхăт çук. Аслисемпе юр туртатăп, вутă йăтатăп. Уçă сывлăшра аван! Çулана килĕштеретĕп. Пахчари пан улмисене пĕчĕк витрепе пуçтаратăп. Кĕркунне те аттепе аннерен юлмастăп, çĕр улми кăларнă çĕрте вăй çитнĕ таран пулăшатăп. Ӳссен летчик пулас тетĕп. Шăп пирĕн килтисем пахчара ĕçленĕ чухне самолетпа вĕçсе иртĕп, алă сулса хăварăп вĕсене. Аня Казакова та мана курса йăл-йăл кулĕ, – хăпартланса каласрĕ Саша.

Пиллĕкри Аня Казакова килĕнчи Маша ятлă хитре пуканене юратать.

– Унăн кĕписене те лавккаран туяннă. Ăна кукка хисеплесе те юратса парнеленĕ. Кайран йăлăхтарсан урăххине илсе парать пулĕ-ха, – тет хĕр ача кăмăллăн.

Аня вуннă таран шутлама пĕлет, сас паллисене вара пăтраштарать.

– Ĕлкĕретĕп-ха, хальлĕхе эпĕ пĕчĕк, – йăл кулать вăл тусĕсене ăшшăн пăхнă май.

## Василиса пит сăпайлă, Аня та ялан кăмăллă

Ыттисемпе танлаштарсан Василиса Хурасева кăшт вăтанчăкрах. Ют çынпа тӳрех сăмах вакламасть.

– Сăпайлăрах çав. Хăнăхма вăхăт кирлĕ ăна. Алăри пӳрнесем те пĕр пек мар та, кунти ачасем те пĕрешкел мар ĕнтĕ. Çитменнине кĕçĕнрех вăл, тăваттăра кăна, – терĕ Елена Гавриловна Василисăна çурăмĕнчен ачашланă май.



Сăвă пăхмасăр калассипе хастар иккен вăл. Аслисене кура вулама, шутлама ăнтăлать.

– Эпĕ пысăк вара, ултă тултартăм. Килтисене пур ĕçре те пулăшма тăрăшатăп. Çывăрса тăрсан вырăна хамах пуçтаратăп, апатланнă хыççăн чашăк-тирĕк çăватăп. Тирпейлĕ пулма пире садикре яланах аса илтереççĕ, – тет Аня Иванова.

Комсомольски районĕ,
Тукай.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин автономи учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● АДРЕС
428019, Чăваш Республики, Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13, VII хут.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" АУО типографийĕнче пичетленĕ.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
А.ЛЕОНТЬЕВ

● ТЕЛЕФОНСЕМ

| | |
|---|---|
| директор-тĕп редактор: | 56-00-67 |
| редактор, çырусемпе тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: | 28-83-86 |
| шкул ачисен пайĕ: | 28-85-69 |
| спорт тата экологи пайĕ: | 56-11-80 |
| право, кăмăл-сипет пайĕ: | 28-83-89 |
| факс: | (8352) 56-15-30 |
| бухгалтери: | 28-83-64 |

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Л.ПЕТРОВА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
2328 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 410
Пичете нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Питĕрте чăваш ташшипе тĕлĕнтернĕ

«Эпир Элĕкри ача-пăча ÿнерĕн шкулĕпе тачă çыхăну тытатпăр, – терĕ чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Алина Геннадьевна Петрова шкулпа паллаштарнă май. – Ку вăл ачана хăйĕн пултарулăхне пĕлсе малалла аталанма пулăшать. Музыка ÿнерне вĕренекенсем акă гитара тата баян калама хăнăхаççĕ. Пĕтĕмĕшле ÿнер искусствине çÿрекенсем вара пуканесене чĕрĕлĕх кĕртме, юрра-кĕвве, ритмикăна тата этикета вĕренеççĕ. Унсăр пуçне ташăпа фольклор ушкăнĕсем пур».



Ўнер шкулне çÿрени çитĕнÿ парать. Акă кăçалхи кăрлачăн 9-13-мĕшĕсенче Питĕрте «Пултарулăхăн чикки çук» ятпа Пĕтĕм тĕнчери ача-пăча тата çамрăксен фестиваль-конкурсĕ иртнĕ. Унта Чăваш Сурăм шкулĕн хастарĕсем те, «Каблучок» ташă ушкăнне çÿрекенсем, хутшăннă. Çамрăк ташăçăсемшĕн ашшĕ-амăшĕпе вĕрентекенсем питĕ хумханнă, вĕсем инçе çултан таврăнасса чăтăмсăр кĕтнĕ.

Конкурса хутшăнакансем çĕр-шывăн пур кĕтесĕнчен те пуçтарăннă. Унта шкул ачисем кăна мар, театр, радио, телевидени, кино ĕçченĕсем тата студентсем те тупăшнă. Кашни хăйĕн пултарулăхне кура вокал, хорпа юрласси, инструмент кĕвви, мода театрĕ, хореографи, театр жанрĕ тата илемлĕ сăмах номинацисенчен пĕрне суйланă. «Каблучок» ушкăн икĕ ташă кăтартнă: пĕри чăвашла – «Атя, ташша яра пар», тепри вырăсла – «Давайте потанцуем». Маттур та пултаруллă ачасем виççĕмĕш вырăна тухнă, вĕсене Кубокпа чысланă. Ўнер шкулĕн директорĕ З.Ф. Васильева, ташă ушкăнĕн ертÿçи Л.В. Ефимова, ачасен ашшĕ-амăшĕсем – И.И. Миронова, З.В. Данилова, Н.В. Владимирова та хисепе тивĕçнĕ, вĕсене Пĕтĕм тĕнчери «Пултарулăхăн чикки çук» конкурс йĕркелÿçисем тав çырăвĕ панă. Чăваш Ен ташă ушкăнĕ ялтан килнĕ пĕртен-пĕр коллектив пулнă. Çакăншăн та вĕсене мухтамалла.

Питĕрте хăйсене тивĕçлипе кăтартнă çамрăк ташăçăсем виççĕмĕшпе тăваттăмĕш классенче вĕренеççĕ. Çак ушкăна çÿреме вĕсене никам та вăйпа хистемест, кăмăл çапла ыйтать. Ахальтен мар Настя Алексеева: «Ташлани пире савăнăç кÿрет, çĕнтерÿ патне илсе çитерет», – тет. Ачасем чассерен районти тĕрлĕ ĕç-пуçа хутшăнаççĕ, унта каллех хăйсен пултарулăхне кăтартса савăнтараççĕ. Шупашкарта та, Çĕнĕ Шупашкарта та пулнăскерсем Питĕрте уйрăмах килĕшнине палăртаççĕ. Хĕллехи кермен, «Аврора» крейсер тата хулан ытти паллă вырăнĕсем чунра ырă аса илÿ хăварнă. «Пĕрремĕш Петĕр патшана куртăмăр!» – тет савăнăçлăн Максим Данилов. Метрора ярăнма та килĕшнĕ вĕсене. Яла таврăнсан тус-тантăшне каласа тĕлĕнтермелли чылай пулнă.

Çулла «Каблучок» Сочири ăмăртăва кайса курĕ. «Ташлакан шкул» программăна пула ачасем пĕрремĕш класранпах çак ушкăна çÿреççĕ. Хаваслă ташăсем вĕреннĕрен кăмăлĕсем яланах çĕкленÿллĕ вĕсен.

Ачасем юрлама та ăста. Çавăн пекех пуканесене чĕрĕлĕх кĕртесси те – вĕсен киленĕçĕ. Теттисемпе хăйсемех ĕçлеççĕ. Кивĕ япаласенчен тем те тума пулать: йытă çури, мулкач, упа çури... Çак ăсталăха пĕтĕмпех Юлия Петровна Степанова вĕрентет. Шупашкарти Пукане театрĕн артисчĕсем час-часах шкула килсе спектакль лартса параççĕ. Ачасем, паллах, вĕсенчен тĕслĕх илеççĕ.

Ĕмĕтпе çунатланакан çыннăн пурнăçĕ самай кăсăклăрах. Вăл хăйĕн умне тĕллев лартса ун патне çитме тăрăшать. Çамрăк ташăçăсем хăйсен пурнăçне малашне те çак ÿнер тĕсĕпе çыхăнтарĕç-ши е урăхларах шухăшпа пурăнаççĕ? Настя Алексеева, сăмахран, шкулта вĕреннĕ чухне ташă ăсталăхне алла илесшĕн, пурнăç çулĕ çине тăма вăхăт çитсен вара тухтăр пуласшăн. «Çĕр çинче пурте сывлăхлă пулинччĕ», – тет вăл. Милена Мироновăпа Катя Григорьева хореограф пулса ачасене ташлама вĕрентесшĕн. Дима Васильев хăйне пуласлăхра полици ĕçченĕ пек курать. «Вăрă-хурахсем никама та ан тапăнччăр, çынсене ан вĕлерччĕр», – тет вăл çирĕппĕн. Илья Орлов та унпа пĕр шухăшлă.

Кайран шăпа мĕнлерех хуçаланассине пĕр турă çеç пĕлет. Халĕ вара çак ачасене пĕр иленÿ çыхăнтарса тăрать – ташă. Вăл вĕсене савăнăç парнелет тата пурнăçа илемлĕрех курма вĕрентет. Ăна пула ачасем малашне тата пысăкрах çитĕнÿсем патне те çитĕç-ха.

# Юрă – чун уççи

«Мана халăх юррисем ытларах килĕшеççĕ», – тет çиччĕмĕшĕнчи Оля Егорова. Чунтан шăранса тухакан йĕркесем тÿрех чĕрен



хĕлĕхĕсене тиveççĕ-çке. «Ларсам, юлташ, юнашар» юрра уйрăмах кăмăллать вăл. Çак ăсталăха Алина Михайловна Михайлова вĕрентет. Ялти культурăпа кану çуртĕнче е Элĕкре иртекен уявсене хĕр ача тăтăшах хутшăнать. Шупашкарта та пулнă, «Сентти» конкурсра икĕ юрă шăрантарнă: «Ларсам, юлташ, юнашар» тата «Аххаяс». «Пĕрремĕшне васкамасăр юрламалла, çавăншăн йывăртарах та. Анчах вăл питĕ илемлĕ, – тет Оля. – Иккĕмĕшне вара хăвăртрах тата хаваслăрах».

Фольклорпа кăсăкланнă вăхăтра паянхи чăваш эстради пирки те манмасть вăл. Ăна та, кăна та килĕштерет. Шкул хыççăн ăçта вĕренме кĕресси пирки хĕр ача шухăшлама пуçланă, килтисене юрра-кĕвве лайăххрах вĕренес килнине пĕлтерсен вĕсем унăн тĕллевне ырланă.

Ĕмĕт пулсан ăна пурнăçа кĕртме тăрăшмалла. Эппин, чи малтанах, шкулта лайăх вĕренмелле. Ольăн дневникĕнче «4» тата «5» паллăсем кăна. Районта иртекен предмет олимпиадисене хастар хутшăнать вăл. Акăлчан чĕлхипе виççĕмĕш, тăван ен культурипе иккĕмĕш тухнă. «Excelsior» фестиваль-конференцие Питрав уявĕн йăли-йĕркипе тата историйĕпе паллаштаракан «Сурăм пуххи» тĕпчев ĕçĕпе хутшăннă. Çавнашкал ĕçсемпе хăй тĕллĕн аппаланма Оля питĕ юратать. Кукамăшĕ пурнăçран уйрăличчен мăнукĕ унран ĕлĕкхи юрăсене те вĕренсе юлнă.

Пушă вăхăтра кĕнеке вулакан хĕр ача К. Булычев, Ю.Алишковский тата В. Крапивин çырнисене кăмăллать. «Вĕсен хайлавĕсем пĕр-пĕрне пулăшма вĕрентеççĕ», – тет Оля. Хăй вăл йывăрлăха лекнĕ çынна яланах алă пама хатĕр.

Çын илеме юратни алă ĕçĕсенче те паллă. Оля чăваш тĕррине кăмăллать, илемлĕ çиппе йĕп тытсан унăн аллинче ĕç вĕресе кăна тăрать. Çакăн пек маттур чăваш хĕрĕсем пуртан пирĕн çĕр-шывăмăр тата илемлĕрех.

# «Юлташсем сăввăмсене юратаççĕ»



«Сăвă çырса пăхам-ха. Пултараятăп-ши?» – çапла иккĕлене-иккĕленех Анжелика темиçе йĕрке çырнă та – кайнă вара малалла. Шухăшсем пуçа таçтан килнĕ те килнĕ. Акă пĕрремĕш хайлав çырăннă. Тăваттăмĕш класра пулнă ку. Халĕ Анжелика Емельянова саккăрмĕшĕнче вĕренет. Ашшĕ-амăшне юратнăран тата час-часах çут çанталăк илемĕпе киленнĕрен çĕнĕрен те çĕнĕ сăвăсем çуралаççĕ унăн. Пурнăçăн кашни саманчĕ хавхалантарать тейĕн. «Манăн ниепле те пулмасть. Эсĕ мĕнле çыратăн?» – тĕлĕнеççĕ хăш чухне юлташĕсем. Вĕсем тантăшĕн кашни хайлавĕпе кăсăкланаççĕ, вуласа пама ыйтаççĕ. Тусĕсен кăмăлне тивĕçтерет вара хĕр ача.

Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен А.Г. Петрова çамрăк сăвăçа хавхалантарсах тăрать, пултарулăх конкурсĕсене тăтăшах хутшăнтарать. Чăваш халăх сайчĕ ирттерекен фантастика хайлавĕсен конкурсĕнче çĕнтернĕ Анжелика, унăн ĕçĕ часах кĕнекере пичетленсе тухмалла.

Çут çанталăк сăнĕсемпе киленнĕ май вăл сăвă çырать кăна мар, ÿкерет те. Хăйĕн хайлавĕсенче вăрмана юратма, илеме курма вĕрентет.

Хĕр ачан аппăшĕпе йăмăкĕ те сăвăпа кăсăкланаççĕ. Олимпиада улттăмĕш класра вĕренет. Ахальтен çапла ят паман пуль ăна, спорт ташшисене юрататъ вăл, пур хусканăва та çăмăллăн пурнăçлать, гимнастка пулма ĕмĕтленет. Вуннăмĕшĕнчи Лариса вара юрăра тата ташăра маттур. Хĕр ачасем питĕ туслă, вĕсен тăванлăх туйăмĕ çирĕп. Çемьери килĕшÿпе ăнлану та Анжеликăна пурнăçа юратма вĕрентекен сăвăсем çырма пулăшать пуль.

# Вăйă карти ирттерекенсем халĕ те пур!



Чăваш Сурăм шкулĕнче пултаруллă та маттур ачасем вĕреннине курса ĕнентĕм. Вĕрентекенĕсене те ырламалла. Вĕсем пĕчĕккисен талантне вăхăтра асăрхаса аталантарма пĕлеççĕ, шкул пурнăçне илемлетеççĕ, яланах пулăшма хатĕр. «Çулсеренех Чăваш чĕлхи эрнинче вăйă карти çавăратпăр. Пĕлтĕр ăна пĕрремĕш хут урамра, шкул умĕнче ирттертĕмĕр. Çанталăкĕ пĕлĕтлĕ тата сивĕ пулин те хăраса тăмарăмăр», – тет Алина Геннадьевна Петрова. Шкулта çирĕммĕш çул ĕçлекенскер ачасен чăвашлăх туйăмне вăйлатма пĕлет, вĕсене сăвă-калав çыртарса конкурссене хутшăнтарать. Хăйĕн те чĕринче поэзи пурăнать, çавăнпа ачасем юратнă вĕрентекенĕнчен тĕслĕх илеççĕ.

Элĕк районĕ,
Чăваш Сурăм шкулĕ.

*Лариса ПЕТРОВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

## Маттурсем!

# Шанчӑклӑ тусӑн хакӗ ҫук




«Тевет» фольклор ушкӑнне ялта ҫеҫ мар, тӑрӑхра та халӑх аван пӗлет. Пӗр уяв та ҫамрӑк артистсем хутшӑнмасӑр иртмест. Ара, ача-пӑча тӑван халӑх юррине юрлани, ташшипе савӑнтарни камӑн чун-кӑмӑлне ҫӗклемӗ? Ушкӑнӑн ертӳҫи – Татьяна Васильевна Макарова. Вӑл тӑрӑшнипех 1993 ҫулта шкулта ачасен «Тевет» фольклор ушкӑнне йӗркеленӗ. Ваттисен кунне халаллanӑ савӑнӑҫлӑ концертра пӗрремӗш хут сцена ҫинче юрланине манаймасть ушкӑн ертӳҫи, мӗншӗн тесен вӑл асра юлакан самант-ҫке, ачасемшӗн пушшех те. «Чылай чухне халӑх пултарулӑхне ялти ватӑсене чӗнсе пӗрле вӗренетпӗр, ачасем хӑйсем курса, вӗренсе, ӑша хывса пыраҫҫӗ. Ушкӑна интересленсех ҫӳреҫҫӗ. Эпир тӗрлӗ халӑх ташшине вӗренетпӗр, каярахпа куракансен умне ҫитеретпӗр», – пӗлтерет Татьяна Васильевна.

## Пӗлӳсӗр ниепле те

Саккӑрмӗш класра вӗренекен Алина Кузьмина шкулта иртекен чылай мероприятие ӑнӑҫлӑ ерт-



се пырать. Нимӗнле ӗҫрен те пӑрӑнманскер, вӗренӳре маттурскер, журналист пулас ӗмӗтпе пурӑнать. Ҫавӑн пекех чылай юлташӗпе «Теветре» хӑйӗн ӑсталӑхне туптать.

**– «Тевет» ушкӑна ҫӳреме мӗн хавхалантарать?**

– Кунта нумай ача ҫӳрет, эпир пӗр-пӗринпе питӗ туслӑ. Ҫавӑнпа пире ҫӑмӑл: ташлатпӑр, юрлатпӑр, савӑнатпӑр. Пӗрле чухне хаваслӑ пире.

**– Алина, журналист пулас ӗмӗт санӑн хӑҫан ҫуралнӑ?**

– Эпӗ мӗн ачаранпах ҫынпа калаҫма, хутшӑнма килӗштеретӗп, интервью илме кӑмӑллатӑп, паллӑ ҫынсем пирки тӗпчеме юрататӑп. Ҫавӑн пекех чӑваш наци радиовӗн «Чӗререн тухакан сӑмахсем» тата «Каҫхи микс» кӑларӑмсене тӑтӑшах итлесе киленетӗп. Чӑвашла питӗ таса та уҫӑмлӑ калаҫни, эфирта тӗрлӗ юрӑ янӑрани кӑмӑла ҫӗклет.

**– Эсӗ тӑван чӗлхене ҫав тери юратни тӳрех сисӗнет...**

– Паллах. Мана тӑван чӗлхе питӗ килӗшет. Унран вӑтанмалла мар, ҫепӗҫ те илемлӗ, атте-анне парнеленӗ чӗлхене упрамалла, ӑна аталантармалла, чӑваш пулнишӗн вӑтанмалла мар.

**– Апла пулсан эсӗ хӑвӑн тантӑшусене мӗн суннӑ пулӑттӑн?**

– Пурте тӑрӑшуллӑ пулччӑр, лайӑх вӗренччӗр, ҫирӗп пӗлӳсӗр пуласлӑх ҫук. Пур енлӗн аталанмалла, ҫынсемпе ырӑ пулмалла.

## «Тевет» ушкӑн хастарӗсем

Улттӑмӗш класра вӗренекен Катя Лукьянова тата Кристина Мельникова чи ҫывӑх тантӑшсем: «Тевет» ушкӑна тахҫантанпах ҫӳреҫҫӗ. Нумай ҫул ӗнтӗ сцена ҫинче выляҫҫӗ тейӗн. Юрӑ-ташӑсӑр пуҫне шкулта иртнӗ «Асамлӑ уҫӑ» юмахра та хӑйсен ролӗсене чӑн-чӑн артистсем пек выляса куракансене тыткӑнланӑ. Хӗр ачасем спортпа питӗ туслӑ, уйрӑмах ҫӑмӑл атлетика тата йӗлтӗрпе чупассине кӑмӑлаҫҫӗ. Унсӑр пуҫне вӗсем «Кӗтне» физкультурӑпа спорт комплексне хӑйсен сывлӑхне ҫирӗплетме ҫӳреҫҫӗ.

**– Катя тата Кристина, эсир уйрӑлми туссем. Мӗн хавхалантарать сире ҫитӗнӳсем туma?**

– Эпир мӗн пӗчӗкрен пӗрле выляса ӳснӗ, ялан туслӑ пулнӑ, халӗ те ҫавнашкалах. Пӗр-пӗрин ҫитӗнӗвӗсемпе савӑнатпӑр, мухтанатпӑр. Ҫавӑ пулӑшать те пулӗ пире пурнӑҫра ҫирӗп утӑмсем тума. Ҫумра туссем пулни яланах кирлӗ.

**– Катя, ӳссен эсӗ кам пуласшӑн?**

– Эпӗ ӳкерме юрататӑп. Кӗҫӗн классене вӗрентекен пулас ӗмӗтпе хавхаланса пурӑнатӑп. Вӗсенчен кашни – хӑй уйрӑм тӗнче. Тем те пӗлме кӑмӑллакансемпе ӗҫleme те хавас пуласшӑн туйӑнать.

## Вӗренӳре те, спортра та малта

Вуннӑмӗш класри Стас Григорьев вӗренӳре ҫеҫ мар, спортра та ҫитӗнӳсем тӑвать. Ҫамрӑк яш нимӗнле ӗҫрен те пӑрӑнмасть. Питӗ правур та хастар, юлташӗсене йывӑр вӑхӑтра яланах пулӑшать. Никита Васильевич Крылов тренер тӑрӑшнипех Стас кӗрешӳҫӗсен районта тата республикӑра иртекен ӑмӑртӑвӗсене хутшӑнса пӗрре кӑна мар Хисеп хучӗ семпе тавраннӑ. Каччӑ ҫитӗнӳсемпе кӑна лӑпланса лармасть. Вӑл шав малалла ӑнтӑлать. «Эпӗ спорт мастерӗ пуласшӑн-ха», – хӑйӗн вӑрттӑнлӑхне кӑшт хумханса та вӑтанса каларӗ яш.

**– Стас, эсӗ спорта килӗштернисӗр пуҫне тата мӗн кӑмӑллатӑн?**

– Эпӗ ҫавӑн пекех копьютерпа темӗн те вуласа пӗлме кӑмӑллатӑп. Анчах ытларах усӑ кӳрекен материалсене вулатӑп. Кил таврашӗнче атте-аннене пулӑшма юрататӑп. Юлташсемпе тӗрлӗ спорт секцийӗсене ҫӳретӗп. Мӗн ачаранпах юрист профессине алла илесшӗн.

**– Лайӑх професси. Спорт епле вара?**

– Спорт мана пурнӑҫра ҫитӗнӳсем тума пулӑшса пырать. Эпӗ ӑна нихҫан пӑрахмастӑп. Тарӑн пӗлӳ илни вара пурнӑҫ тӑршшӗпех кирлӗ пулӗ.

**– Мӗнех, ӑнӑҫу вара сана.**

– Тавтапуҫ.

Тӑххӑрмӗш класра вӗренекен Катя Кадыкова йӗлтӗрпе чупассине, ҫӑмӑл атлетикӑна тата тӗрлӗ спорт вӑййисене чунтан килӗштерет. «Аттепе анне те спортсменсем пулнӑ, вӗсен ҫитӗнӗвӗсем халӗ мана хавхалантарса пыраҫҫӗ», – тет хӗр. Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн кубокӗшӗн иртнӗ ӑмӑртура Катя иккӗмӗш вырӑн ҫӗнсе илме пултарнӑ. Йӗлтӗрҫӗсен ӑмӑртӑвӗ сенче те хӗр ҫулсерен ҫӗнтерӳҫӗ ята тивӗҫет. Валерий Иванович Плешков, физкультура учителӗ тата тренер, Катя питӗ тӑрӑшуллӑ, вӑл хӑйӗн ҫитӗнӗвне яланах ҫӗнетме тӑрӑшать, паллӑ спортсмен пулма ӗмӗтленет тесе пӗлтерет.

**– Катя, сана спортра ҫитӗнӳсем тума мӗн пулӑшать?**

– Тӗрлӗ йышши ӑмӑртӑва пӗрре кӑна мар хутшӑннӑ хыҫҫӑн ыттисенчен вӗренмелли нумай. Спортра ҫитӗнӳсем тума паллах мана аттепе анне вӑй-хӑват хушса пыраҫҫӗ. Яланах тренировкӑсене ҫӳремелле, хамӑн ӑсталӑха ӳстермелле. Эпӗ спорт мастерӗн кандидатӗнчен, Инесса Андреевӑран, Раҫҫей чемпионачӗн призерӗнчен тӗслӗх илетӗп. Ҫавӑн пек пуласчӗ.



*Алексей ТОРГОВЦЕВ.*
Комсомольски районӗ,
Чурачӑк шкулӗ.

# Паянхи шкул ачине ял шăпи кăсăклантарать-ши?

«Ял пĕтсен çĕр-шыв пĕтет», – теççĕ. Чăнах та, хула çынни тырă-пулă ÿстермест, пахча çимĕç çитĕнтермест, выльăх усрамасть. Çапах çăкăрне те, çĕр улмипе хăяр таврашне те, аш-какайне те кăмăллать. Лавккара çакна йăлтах туянма пулать. Анчах унта вăл ăçтан лекет-ши? Паллах, ялтан. Шухăшласа кăна пăхăр, эпир пурте хулана тарсан, ял пушанса юлсан, хамăр та выçлăха кĕрсе ÿкмĕпĕр-ши?

«Пуласлăх – çамрăксен аллинче», – тенине илтетпĕр час-часах. Эппин, çамрăксенче мĕн чухлĕ яваплăх! Шкултан вĕренсе тухакан кашни ача çĕр-шыв мĕнле çул-йĕрпе каясси хăйĕнчен килнине туять-ши? Ашшĕ-амăшĕ тата вĕрентекенсем каланине ăса хывсан, хăйĕн шухăшлавне аталантарма пĕлсен çак яваплăха та ăнланатех пуль тетĕп.

Çак йывăр лару-тăру пирки шкул ачисем мĕн шухăшлаççĕ-ши?

**Зоя Дементьева** (*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси шкулĕ, 9 класс*): Ял ачисем хулана туртăнни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Манăн та унта пурăнса пăхас килет. Анчах кайран пĕрех яла таврăнăп. Çуралнă вырăн пуринчен те хаклă-çке! Ялтисем чылай чухне хуларисемпе танлашасшăн. Çавăнпа пирĕн патрах аслă пĕлÿ илме май пулсан никам та хулана каймĕччĕ тесе шухăшлатăп.



**Галина Ильина** (*Элĕк районĕ, Мăн Вылă шкулĕ, 8 класс*): Ялти пурнăç хуларинчен нимĕнпе те улшăнса тăмасть. Анчах та аслă пĕлÿ илсен пур профессипе те ялта ĕç тупма çук-çке. Клубсем, сыватмăшсем тата вулавăшсем питĕ сахал, хăш-пĕр ялта пачах çук вĕсем. Эпĕ аслă пĕлÿ илсен хуларах юлăп, мĕншĕн тесен унта кăна лайăх ĕçе вырнаçма пулĕ.



**Сергей Бармин** (*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси шкулĕ, 6 класс*): Ял çыннин ялтах пурăнас килет пуль, мĕншĕн тесен вăл кунта çуралса ÿснĕ. Хуларисем вара (тĕслĕхрен, Мускаврисем) пирĕн пурнăçа пĕлмеççĕ те. Манăн та хулара пурăнас килет, унта çăмăл пек туйăнать, хĕрсем те нумайрах. Кайран яла таврăнас шухăш пур-ха. Тен, унччен пирĕн патра айфонпа усă курасси те анлă сарăлĕ? Кашни кунах клуб уçсан та аванччĕ.



**Августина Нестерова** (*Канаш районĕ, Энтрияль шкулĕ, 11 класс*): Тепĕр вунă çултан ялсем хула пекех пулĕç. Çуртсем те ÿссе ларĕç. Ялсене пулăшу парсан унта тем те пĕр уçăлĕ: пысăк лавккасем, спорт керменĕсем, парксем, ял хуçалăх фермисем. Юлашки вăхăтра нумайăшĕ яла таврăнни сисĕнет. Пирĕн шкулта, тĕслĕхрен, вырăс ачисем те вĕренеççĕ. Çĕнĕ халăх хăй те яла аталантарма тăрăшсан унăн пуласлăхĕ пур тетĕп. Уйăрса панă укçана ял тăрăхĕн пуçлăхĕ тĕрĕс усă курсан, çĕнĕ çуртсем тусан, халăх хăйĕн пурлăхне упрама пĕлсен ял малалла та аталанĕ. Çын шучĕ пирки вара... Ман шутпа, ялта пурăнма лайăх пулсан нумайăшĕ хуларан яланлăхах куçса килĕ. Унсăр пуçне ялта сывлăхлă пулма çăмăлрах. Сывлăшĕ таса та уçă. Ÿркенмесен пахча çимĕç туса илĕн, апат-çимĕç те усăллăрах пулĕ. Халĕ патшалăх çамрăксене яла илĕртес тесе кунта ĕçе вырнаçнисене укçа та парать, çурт лартма пулăшать. Чăнах та, ку питĕ лайăх. Анчах пур çĕрте те пĕр пек мар вĕт-ха. Хăш-пĕр ялта паянхи кун та асфальт çул сарман. Çавăнпа та малтанах пурăнма лайăх пултăр тесе тăрăшмалла, çыннисем те кайран хăйсемех яла туртăнĕç. Ял пуласлăхĕ – патшалăх, ял администраци пуçлăхĕн тата халăх аллинче. Пирĕн пуласлăх хамăртан килет.



**Аня Михеева** (*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Мăн Этмен шкулĕ, 10 класс*): Пирĕн патшалăх тата çуртсем хăпартаççĕ. Çавăнпа та ялта çын шучĕ нумайланас пек туйăнать. Кунта çут çанталăк та илемлĕрех, тавралăх таса, сывлăшĕ те сиплĕрех. Эпĕ хам ялта юлас пулсан çакăнта нимĕн япăххи те курмастăп. Аслă пĕлÿ илсен яла таврăнма майсем те пур халĕ. Ĕç вырăнĕсем ытларах пулсан вара питĕ аванччĕ.



**Света Гусева** (*Етĕрне районĕ, Мăн Явăш шкулĕ, 8 класс*): Ял ачисем ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртме тесе хулана каяççĕ. Унта професси тĕлĕшĕнчен суйламалăх пур, ялти йывăр ĕçсем çинчен те манса кайма пулать. Çавăнпа аслă пĕлÿ илсен нумайăшĕ хуларах юлать. Умра пысăк çул уçăлать, чаплă çын пулса тăма май пур. Ялта вара кун пирки ĕмĕтленмелли те çук. Хăшĕ-пĕри кайран тăван енех таврăнать, мĕншĕн тесен хулара ял ачисене юратмаççĕ, вĕсенчен кулма хăтланаççĕ. Чăннипе вара ял хуларан лайăхрах та. Кунта таса та уçă сывлăш, пахчара тĕрлĕ çимĕçсем ÿсеççĕ, тулта ачасемпе нимрен хăрамасăрах выляма пулать. Велосипедпа та ирĕккĕнех çÿре, хĕлле анкартине тухса йĕлтĕрпе ярăн, пурнăç ырлăхĕпе савăнса кăна пурăн! Эпĕ çитĕнсен хулана кайма шухăшлатăп. Институтран вĕренсе тухăп, карьера тăвăп. Ял çинчен те манса каймăп. Эпĕ кунта çуралнă, ÿснĕ, халĕ те пурăнатăп.



**Ирина Огандеркина** (*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси шкулĕ, 11 класс*): Ман шухăшпа, ялăн пуласлăхĕ пур. Тĕслĕхрен, пирĕн ял пуянланса пырать, çĕнĕ магазинсем уçăлаççĕ, кирпĕч çуртсем çĕкленеççĕ. Çамрăксем аслă пĕлÿ илсен яла таврăнччăр тесен пенси çулне çитнисене ĕçрен кăларса ямалла, çамрăккисене çул уçса памалла.



**Андрей Миронов** (*Хĕрлĕ Чутай районĕ, Çĕн Атикасси шкулĕ, 10 класс*):

Ĕç пулсан аякри хуласене укçа шыраса каякансем те яла таврăнĕç. Мĕншĕн тесен укçасăр пурнăç тăваймастăн: кил-çурт та хăпартмалла, лавккана кайма та кирлĕ. Эпĕ пилĕк çулта чухнех ĕçĕ те пурччĕ, çынсем çемйипех колхозраччĕ, ваттинчен пуçласа вĕтти таранах. Халĕ вара колхозсене пĕтерчĕç, хăш-пĕр ялта кăна юлнă. Çамрăксем те çавăнпах хуласене тухса каяççĕ пуль. Культура керменĕсене çĕнĕрен тусан лайăхчĕ, çамрăксем унта кану вăхăтне ирттерĕç. Ялта пурăнакансене шкул ачисем концерт лартса парĕччĕç. Ку ачасене аталанма та май парать, ĕçе те хăнăхĕç. Халĕ вара ялта ним тума аптăранипе нумайăшĕ эрех ĕçме хăнăхать. Пурте ун пек мар, паллах, анчах пур. Тепĕр вунă çултан ялсенче пушă çуртсем юласран хăратăп. Маларах каланă пек, пĕтĕм çамрăк хулана туртăнать вĕт-ха. «Ялта мĕн пур унта?» – тет чылайăшĕ. Çапах ыррине шанас килет. Хамăр тăрăшсан пурте пулĕ.



*Лариса ПЕТРОВА.*

## Тăван ялăм çапла пуçланнă

***Кăçал çĕр-шывра Культура çулталăкĕ иртет. Эпир те, «Тантăш» хаçат тусĕсем тата çамрăк тавра пĕлÿçĕсем, ăна паллă тăвас тетпĕр. Çав тĕллевпе «Чăваш Республикинчи учительсен ассоциацийĕ» çумĕнчи чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекенсен секцийĕ (ертÿçи – Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕ Г.Л.Никифоров) редакципе пĕрле «Тăван ялăм çапла пуçланнă» конкурс йĕркелеме йышăнчĕ. Кунта эпир Чăваш Енри кашни ял мĕнле пуçланса кайни пирки сăмах хускатасшăн. Çак ĕçре эсир, вулакансем, пулăшни питĕ вырăнлă. Хăвăрăн тăван ял мĕнле йĕркеленни пирки мĕн пĕлнине çырса пĕлтерсен эпир сире чĕререн тав тунă пулăттăмăр***.

Хамăрăн кăк тымара, ял кун-çулне тĕплĕн пĕлмесĕр малашлăха утма хĕн. Ял историне пĕлмелле кăна мар, вăл манăçа ан тухтăр тесе хут çине çырса хумалла. Çавăнпа та ĕнтĕ шырав ĕçне пуçăнар пуль.

Ăна çырас ĕçре пулăшас шутпа 10 ыйту хатĕрлерĕмĕр. Вĕсене хуравлани кăна çителĕксĕр. Ял кун-çулне май килнĕ таран тулли тата çыхăнтарса çырма тăрăшăр.

Сирĕн ĕçĕрсенчи ял халапĕсем тĕрлĕрен пулма пултарĕç. Хăшĕ-пĕри истори чăнлăхĕсемпе килĕшсе те тăмĕ. Апла пулин те иртнĕ пурнăçа лайăх пĕлекен ватă çынсем мĕн каланине ним улăштармасăр çырса илĕр. Ял пуçламăшне калаcа параканăн хушаматне, ятне, ашшĕ ятне, хăçан тата хăш ялта çуралнине çырма ан манăр.

**«Тăван ялăм çапла пуçланнă»** конкурс ĕçĕсене раштавăн 1-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕпĕр. Пахалăхлă хайлавсен авторĕсене парнесемпе чыслăпăр.

«Тăван ялăм çапла пуçланнă» ĕçе çырма пулăшакан ыйтусем:

1. Ял ячĕ: чăвашла, вырăсла, чиркÿ пулнă пулсассăн чиркÿ ячĕпе панă ят. Ятне хăвăр ялтисем, кÿршĕсем епле калаççĕ?
2. Ят пĕлтерĕшĕ.
3. Ял пуçланса кайни çинчен калакан халап. Вĕсем темиçе те пулма пултараççĕ. Вĕсене те çырăр.
4. Пуçаракан çыннăн е йăхăн ячĕ.
5. Ялăн малтанхи вырăнĕ (Кивçурт вырăнĕ) ăçта тата мĕнлерех пулнă?
6. Ялăн хальхи вырăнĕ мĕнле?
7. Ял миçе ĕмĕр каялла пуçланнă?
8. Сирĕн ентешсем çĕр-шыв историйĕнче палăрман-и?
9. Ял çумĕнче истори палăкĕсем çук-и?
10. Ял çĕнелсе, улшăнса пырать-и?
11. Унăн пуласлăхĕ, малашлăхĕ пур-и?

**Хуравсене «Тантăш» хаçат редакцине çак адреспа ярса парăр:**

428019, Шупашкар, Иван Яковлев проспекчĕ, 13. 7 хут е редакцин электрон адресĕ çине – **tantas@list.ru**

# Пушкăртра «Шупашкар калаçмасть», телекурав та савăнтармасть...

***Иван Яковлевич Яковлев чăваш халăхне çутта кăларассишĕн ырми-канми ĕçленĕ. Çавна пула хура-шурра та, инкек-синкекне те пайтах курнă. Çавах савăнмалли ытларах пулнă. Ялсенче шкулсем уçăлнă. Ĕнтĕ унăн вĕренекенĕсем ачасене пĕлӳ пама тытăннă. Иван Яковлевича чăвашсем сума сунă. «Пире çутта кăларса ăс паракан», – тенĕ ун пирки. Çапла вара чăваш шкулĕсем чăвашсемшĕн хĕвел выранне пулса тăнă.***



Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн пуçлăхĕ пар лаша кӳлсе ял-ял тăрăх çӳресе шкулсене тĕрĕсленĕ. Учительсемпе тĕл пулнă, пуласлăх пирки шухăшланă.

**– Шел, юлашки вăхăтра ял ачисем куç умĕнчех вырăсланни чĕрене çав тери хытă ыраттарать, – теççĕ Етĕрне районĕнчи Пушкăрт шкулĕн педагогĕсем ассăн сывласа.**

– Вырăс чĕлхи тăван чĕлхе вырăнне пулмалла мар. Вырăс чĕлхи тăван чĕлхепе пĕрле, унăн шăллĕ пек пулмалла... Историе лайăххрах тĕпчесен, паттăрсем тăван чĕлхешĕн, тăван халăхшăн кĕрешнĕ. Ун пек харсăрсем пирĕн халăхăн та сахал мар пулнă. Тăван чĕлхене хисеплемен çын тăван халăхшăн хыпсаçунманни каламасăрах паллă, – тенĕ час-часах хăй шухăшне палăртса.

Вĕреннĕ çынсем литературăра та тăрăшса ĕçлеме тытăннă. Акă Игнатий Иванов Иван Яковлевичăн вĕренекенĕ, çывăх та шанчăклă тусĕ ăса вĕрентсе калакан хайлавсем шăрçалама тытăннă. Унăн «Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă», «Çынна усал тăвакан хăй те усал курать», «Аттăна тăхăн та çăпатана та кăларса ан пăрах» е тата ытти калавне юратса вуланă.

## Вуламан çыннăн ăс-тăнĕ те, тавра-курăмĕ те шĕвек



— Çапла, ял шкулĕсенче те чылай чухне ачасем чăвашла çепĕççĕн калаçнине илтме йывăртарах. Тĕслĕхне таçта аякран илсе кăтартмастăп, хамăр патăрта та çавах. Ачасем килте те, урамра та, шкулта та вырăсла пуплеççĕ. Паянхи кун садике кĕрсен те пĕчĕккисем чăвашла калаçнине сайра илтме тӳр килет. Ашшĕ-амăшĕ вĕсемпе килте тăван чĕлхепе пуплеменни чуна ыраттарать. Вырăсла çеç калаçтарса пысăк çын тăвасшăн пулĕ ахăртнех, анчах ку чăвашлăха манмалла тенине пĕлтермест вĕт-ха? Мĕн ĕлĕкрен чăваш çыннисемех паллă композиторсем, писательсем, архитекторсем, художниксем пулса çитĕннĕ, çĕр-шыва юрăхлисен йышне лекнĕ. Ун чухнехи çамрăксем чăвашла шăкăртаттарса калаçнисĕр пуçне илемлĕ çырма пĕлнĕ, литература чылай вуланă. Шкултан вĕренсе тухса аслă шкула çăмăллăнах вĕренме кĕнĕ. Эп хам ача чухне кĕнеке алăран яман. Ас тăватăп, Леонид Агаковăн «Партизан Мурат» хайлавне мĕн тери хăпартланса вуларăм! Ун чухне тĕп сăнарпа пĕрле хам та çав йывăрлăха чăтса çĕнĕ пурнăçа илсе каякан çул çине тухрăм пек. Паянхи шкул ачине вара кĕнеке мар, компьютер ытларах илĕртет. Аслисем чармасан вĕсем унта кунĕн-çĕрĕн, апат çинчен мансах ларма пултараççĕ. Вуламан çыннăн ăс-тăнĕ те, тавра курăмĕ те шĕвек, калаçу чĕлхи те типĕ. Сăмах пуххи çав тери чухăн пулнăран сочинени, изложени çырасси те вĕсемшĕн кăткăс. Чăваш чĕлхи мĕн тери çепĕç пулнине туясшăн та мар. Халь авă шкулта уява хатĕрленнĕ чух: «Чăвашла е вырăсла ирттермелле?» – тесе шухăша путатăп. Чун çав тери ыратать манăн, – терĕ историпе обществознани вĕрентекенĕ Василиса Николаевна Столярова ассăн сывласа.

## Ăçта пурăнатпăр эпир? Чăвашра!

— Иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсенче халăх выçăпа асапланнă. Манăн кукамайăн та вăй-халĕ кунсерен чакнă. Пĕррехинче вара вĕсене Украинăна ача çуртне ăсатнă. Унта çăмăлрах пулнă, май килнĕ таран çитернĕ, тăхăнтартнă. Кукамай паллах унти ачасемпе вырăсла калаçнă, апла пулин те чăваш чĕлхине манман. Эпĕ хам та хула сывлăшĕпе ӳснĕ. Апла пулин те маншăн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. Ял ачисем «вырăсланнине» вара ниепле те ăша хывма пултараймастăп. Чăваш ачисемех: «Мĕн терĕр эсир, эпĕ чăвашла ăнланмастăп та, пĕлместĕп те», – тенине чун ниепле те йышăнмасть. Ăçта пурăнатпăр эпир? Чăвашра! Чăваш сывлăшĕпе сывлатпăр, чăваш çăкăрне çиетпĕр, унти вăрманĕсенче милĕк хуçатпăр, кăмпа-çырла пуçтаратпăр. Çук, эпĕ никама та ятламастăп. Тăван чĕлхене хисеплеме çеç ыйтасшăн чăваш халăхне тата унăн ачи-пăчине. Манăн хамăн тĕпренчĕкĕмсем икĕ чĕлхепе те лайăх калаçаççĕ, çынсемпе хутшăнаççĕ. Грамматика тĕлĕшĕнчен пĕрре те «уксахламаççĕ». Çакна эпĕ хамăн çитĕнӳ тесе шутлатăп. Вĕсене чăваш чĕлхинчен писме мар, ăна юратма тата хаклама вĕрентрĕм. Иван Яковлевич Яковлева чĕртсе лартас пулсан... Каламасăрах паллă, вăл пирĕнтен тĕлĕнсе пĕтереймен пулĕччĕ. «Чăваш халăхне çутта кăларас тесе мĕн тĕрлĕ хĕн-хур, инкек куртăм. Çапах чăтнă, шанчăка упранă. Юратнă чĕлхене, ырă йăла-йĕркене упраса хăварнă. Эсир вара мĕн хăтланатăр? Пирĕн йăх-несĕлсем хăйсен ĕмĕрне малашне епле пурăнса ирттерĕç-ши, упрайĕç-ши кăштах та пулин чăвашлăха? Е хăйсем чăваш пулнине йăлтах манса кайĕç-ши?» – тесе калать ахăртнех. Эх, тутарсене питĕ ăмсанатăп, вĕсем хăйсен чĕлхине ылтăн пек упраççĕ.



Кирек ăçта кайсан та тăван чĕлхипе шакăртаттарса, никамран вăтанмасăр пуплеççĕ. Эпир вара мĕншĕн хамăр чĕлхене хисеплеместпĕр? Айăпĕ камра? – калаçăва хутшăннă май чун ыратăвне те пĕрле пайлама тăрăшрĕ биологи учителĕ Ирина Вениаминовна Салтыкова та.

## Анне патĕнче – çăтмах!

— Ачалăхăм Красноармейски районĕнчи Вутланра питĕ хаваслă иртрĕ. Шкул пурнăçĕ уйрăмах асра юлчĕ. Чăваш чĕлхипе литератури предметне мĕн тери юрататтăмăр. Ăмăртмалла библиотекăна чупаттăмăр, унта упранакан пĕтĕм чăваш кĕнекине вуласа тухнă ахăртнех. Çĕнĕ хайлавсен пуххине илсе килессе чăтăмсăррăн кĕтеттĕмĕр тата! Почтальон вара кĕтнĕ хăначчĕ, ăна курсан хирĕç чупаттăмăр. «Пионер сасси» хаçата алла илсен çунат хушнăн туяттăмăр! Республикăри ачасен пултарулăхĕпе паллашса хавхаланаттăмăр, вĕсенчен тĕслĕх илсе вĕренӳре, спортра çитĕнӳ тума ăнтăлаттăмăр. Тĕрлĕ уявра стена хаçачĕ кăлараттăмăр та киле каçа юлса таврăнни пĕрре мар пулнă. Литература тата драма кружокĕсене çӳреме те вăхăт тупнă. Унта ăсталăха туптани пурнăçра хавхалану паратчĕ. Шăпа мана Етĕрне тăрăхне илсе çитерчĕ. Халь ачасене чăваш чĕлхипе литературине вĕрентетĕп. Унччченхи çулсенче ачасем чăвашла хитре калаçнă пулсан, паянхи пурнăç йăлтах ылмашăнчĕ. Вырăслантăмăр. Е урăхла каласан, халĕ эпир ни вырăс, ни чăваш мар. Урокра хамăн тĕллеве пурнăçлас тесе çине тăрса тăрăшатăп, анчах та пĕччен вăй хунин усси сахалтарах. Ара, килĕнче ашшĕ-амăшĕ вĕсемпе вырăсла пуплет-çке. Çакă хамăн вĕренекенсене Костя Матвеевпа Маркс Комиссарова питĕ шухăшлаттаратчĕ. Пĕррехинче вара вĕсем «Чăвашлăх тата спутник телевиденийĕ» доклад çырса районта тата республикăра иртнĕ наукăпа практика конферецине хутшăнса мала тухрĕç. Чăнах, ялта кашни спутник антенни лартнăран чăваш передачисене кураймастпăр, наци радиовĕ те тытмасть пĕрех хутчен. Ачасем чăвашла калаçнине курса-илтсе сăмах пуххине пуянлатаймаççĕ вĕт-ха капла. Пĕррехинче шкулта телевидени «Шевле» передача ӳкерчĕ. Ăна вара Интернет урлă аран пăхкаларăмăр. Пĕлтĕр пĕтĕм чăвашсен пĕрлĕхлĕ диктанте те асаплăн шăрçаларăмăр. Каллех Интернет пулăшнипе. Чăваш передачисемшĕн питĕ тунсăхлатăп. Анне патне кайсан хама утравран çăлăнса тухнă телейлĕ çын пекех туятăп. Чăваш передачисем курса савăнатăп. Кунĕпех наци радиовне янраттаратăп. Кӳршĕ-аршăпа чăн-чăвашла сăмахлатăп. Çăтмах! Куç умне ачалăх тухса тăрать. Ир-ирех чăвашла: «Ырă ир, Шупашкар калаçать», – янăратчĕ эфирта дикторăн çепĕç те илемлĕ сасси халăха сывлăх суннă май. Ку сăмахсем кӳршĕ ачине те килĕшетчĕç çав, урам тăрăх чупса: «Шупалякка калаçаа-ать!» – кăшкăратчĕ пĕтĕм чун хавалĕпе. «Ăраскал» ярăм – чун уççиччĕ. Чăваш спектаклĕсене итленĕ чух пурте радио çумнерех вырнаçаттăмăр. Артистсем çыпăçуллă калаçни чуна çу евĕр çемçететчĕ. Шел, çав вăхăтсем иртнĕ вăхăтра кăна юлаççĕ, – тет чăвш чĕлхипе литератури вĕрентекенĕ Светлана Ивановна Тобоева.

Етĕрне районĕ,
Пушкăрт.
**АВТОР** сăн ӳкерчĕкĕсем.

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Пĕрлĕх чул хӳмерен çирĕпрех

Çичĕ çул шкул директорĕнче вăй хуракан Людмила Михайловна Федоровăна çамрăксем вырăсланса пыни тарăн шухăша путарчĕ. «Ял икĕ хула çывăхĕнче вырнаçни витĕм кӳрет ахăртнех, кирек ăçта та вырăсла пуплеççĕ. Ку маншăн чун ыратăвĕ. Пирĕн, чăвашсен, чи малтанах хамăра ăнланма, хисеплеме пĕлмелле, кирлĕ чухне пĕр-пĕрне пулăшмалла. Чăмăр мĕнрен пулать? Пӳрнесенчен. Пилĕк пӳрне пĕрле пĕрлешеççĕ те чăмăр пулать. Кашни пӳрне уйрăм чухне унăн вăйĕ çук. «Çыхман çапă шăпăр мар», – тесе ваттисем тĕрĕсех каланă çав. Ачасенче çĕнĕрен чăвашлăх туйăмне аталантарас тесен пирĕн, вĕрентекенсен, пĕр чăмăра пĕрлешмелле», – тенĕ вăл ума çирĕп тĕллев лартса.



## Линейка та чăвашла иртет

Людмила Михайловна хăй ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ. Малтанхи утăмсем пур. Ăнăçлă. Ашшĕ-амăш пухăвĕнче çак ыйтăва тапратрĕ вăл. «Эсир пире ăнланса пулăшасса шанатпăр. Ачасемпе килте чăвашла калаçăр, тархасшăн, унсăрăн эпир хамăр тĕллĕн çеç малалла каяймăпăр. Пирĕн хамăрăн йăх-несĕл чĕлхине манăçа кăлармалла мар. Ăна упрамалла, хамăр чăваш пулнишĕн мухтанмалла!» – терĕ пурин умĕнче те ун чухне.

Шкул пурнăçĕ палăрмалла улшăнчĕ. Коридорта ачасем пĕр-пĕринпе чăвашла сывлăх сунаççĕ, тĕрлĕ мероприяти тата линейка та чăн чăвашла иртеççĕ. Вĕренекенсем ытларах чăваш писателĕсен хайлавĕсене вулама пикенчĕç. Унччен ача алли курман чăваш кĕнекисемпе паян пĕри те тепри юратса паллашать. Библиотекăран та çамрăксем тухма пĕлмеççĕ ĕнтĕ.

– Чун савăнăçпа тулчĕ. Чăваш йăли-йĕркине çирĕп пăхăнса пурăнакан чылай ку тăрăхра. Вĕсемпе тăтăш тĕл пулу ирттерме тытăнтăмăр. Аслисен калаçăвне тимлесех итлеççĕ кĕçĕннисем, кăсăкланса каяççĕ те тĕрлĕ ыйту параççĕ. Уйрăмах чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕсене Елена Павловна Даниловăпа Вера Алексеевна Егоровăна пысăк тав сăмахĕ калас килет. Йывăр лава туртса пыраççĕ. Урокра вĕсен ку енĕпе ытларах ĕçлемелле-çке. Салтак ăсатма кайрăм пĕррехинче. Аслă класс арçын ачисем тăнине курсан: «Килме килнĕ те-ха эсир, анчах салтак юрри юрлама пĕлетĕр-и-ха?» – терĕм хайхисене. «Уй, Людмила Михайловна, тем ан калаçăр-ха. Пире ăна-кăна Елена Павловна вĕрентет вĕт!» – терĕç пĕр харăссăн. Чăн та, салтак юррине мĕн тери хитре юрланине илтсен чун савăнчĕ, – терĕ шкул директорĕ пĕтĕм кăмăлтан.

Халĕ педагогсем садик ĕçченĕсемпе те килĕшӳ тунă. Воспитательсем те пĕчĕккисемпе чăн чăвашла калаçаççĕ. Çавăнпа та килес ăру аттеанне чĕлхине манăçа кăлармасса шансах тăрать Людмила Михайловна.

## «Пĕчĕк утравра» тапаçланатпăр-ха

– Пилĕк çул каялла ачасем паянхи пек «вырăсланманччĕ-ха». Йăлтах йĕркеллĕччĕ. Халĕ вĕсем ни вырăс, ни чăваш. Ансат сăмахсенех йăнăшпа çыраççĕ. Чун ыратнăранах ашшĕ-амăшне ĕç тетрачĕсене кăтартрăм. «Эсир хăвăр çаксене нихăçан та йăнăшпа шăрçаламан, мĕн-ма тесессĕн час-час алла кĕнеке тытаттăр. Хаçат-журнал вуласа та ялан çĕннине пĕлме тăрăшаттăр», – терĕм пухура. Пурте пĕр шухăшлă пулса пире пулăшма сăмах пачĕç. Тĕпренчĕкĕсене чăвашла калаçтармаллине, чăваш кĕнекисене вулаттармаллине ăнланса илчĕç вĕсем. Урокра та вырăс сăмахĕсенчен хăтăлма тăрăшатпăр, предложенисене те тĕрĕс йĕркелесе калаçатпăр, çыратпăр. Чи савăнмалли – никам та, ай, ман пур пĕр пулмасть тесе алă сулмасть. Халĕ кашни ача килте чăваш кĕнеки вулать. Кайран урокра вĕсенчен содержани ыйтатăп. Чун савăнать, мĕн вуланине йăлтах каласа параççĕ. Ăнланман сăмахсене тетраде çыраççĕ те мĕне пĕлтернине манран ыйтаççĕ е словарьпе усă курса унăн пĕлтерĕшне хăйсемех шыраççĕ. Çапла «пĕчĕк утрава» майĕ-пен тапаçланатпăр. «Пĕр çын сурсан типсе ларать, пин çын сурсан кӳлĕ пулать», – тенешкел, çакнашкал ăнтăлу пирĕн шкулта кăна мар,



республикăри ытти пĕлӳ çуртĕнче те пулсан мĕн тери аванччĕ. Мĕншĕн тесен эпир çеç тапратнă пĕчĕк çулăм самантрах сӳнсе ларма пултарать-çке. Ăна вăйлатас тесен пурин те пĕр шухăшлă пулса кар тăрса ĕçлемелле. Чăваш халăхне çутта кăларнă Иван Яковлевич Яковлев пек. Коридорсемпе класс пӳлĕмĕсене, столовăйĕнче йăлтах чăвашла ларăшсем çырса çакса хумалла. Стена хаçачĕсене те ĕлĕкхилле чăвашла кăлармалла. Çавăн пекех республикăри хаçат-журналпа тачă çыхăну тытмалла. Сăвă-хайлав шăрçаласа редакцие ямалла. Вара тинех чăваш шкулĕсене чăвашлăх хумĕ варкăшса кĕрĕ. Вырăс чĕлхи предметне ертсе пыракан педагогсем çирĕплетнĕ тăрăх, чăвашла хитре те таса калаçакан, унăн грамматикине те аван пĕлекен ача вырăс чĕлхи урокĕсенче те пултаруллисен шутĕнче. Уншăн чăвашла, вырăсла çырасси пачах та йывăр мар, – тет Елена Павловна Данилова чун ыратăвне пĕрле пайланă май.

Чăвашлăхшăн чунпа хыпса çунакан педагогăн ĕмĕчĕсем татах та пысăк-ха. Ачасене чăвашла шухăшлама вĕрентес тесе час-час сочинени, изложени çыртарĕ, сăвă-калав илемне туйма тата та ытларах кĕнеке вулаттарĕ. Мал ĕмĕтлĕ ачасене малтанлăха пĕчĕкрех заметкăсем çырса «Тантăш» хаçатпа туслаштарĕ.

– Тен, тăрăшсан, пирĕн вĕренекенсенчен пĕри «Тантăш» лауреачĕ пулса тăрĕ. Çапах та эпир шанăçа çухатмастпăрах, – тет хастар педагог ыррине шанса.

## Кашни сăмахĕ – ылтăн пĕрчи

– Пирĕн шкула çĕнĕ сывлăш варкăшса кĕни питĕ савăнтарчĕ. Халĕ чăвашла хитре калаçма тăрăшатпăр. Унăн илемне туйма вĕренетпĕр. Уявсем те чăвашла иртеççĕ, линейкăра та пурте тăван чĕлхепе калаçаççĕ. Çакă мана питĕ килĕшет. Тăван чĕлхене упрасa хăварасси хамăртан килет-çке. Ăна аталантарса пуянлатассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет те Елена Павловна Данилова педагог. «Тăван çĕр çинче пурăнакан пĕр çыннăн та хăйĕн тăван чĕлхине ют чĕлхешĕн манса каймалла мар. Чăваш чĕлхи çав тери пуян. Манса ан кайăр, тӳпери кашни çăлтăра та чăваш авалах чăвашла ят панă. Çут çанталăкри кашни пулăм валли те уйрăм сăмах пур. Уй-хирти кашни курăка, чечеке, вăрманти кашни йывăçа эпир чăваш сăмахĕпе калатпăр. Апла пулсан пирĕн чăваш чĕлхине нихăçан та вилме памалла мар. Сирĕн чунăрсем ялан таса пулччăр, чĕрĕрсенче хĕлхем ялкăштăр», – терĕ вăл пĕррехинче урокра чун-чĕрине тахçанах капланса килнĕ шухăшне пĕлтерсе. Тĕп-тĕрĕс сăмахсем, – тет çиччĕмĕш класра ăс пухакан Света Протолионова.

Света та халĕ ыттисем пекех урока хатĕрленсе чăвашла доклад çырать, юратнă писателĕсен кĕнекисене илме библиотекăна васкать. Ялан вулать вăл, мĕн ас туса юлнине тетраде çырать. Чăваш чĕлхи олимпиадине те çине тăрса хатĕрленчĕ. Мĕн тетĕр! Тăрăшни, вăй хуни харама каймарĕ, район шайĕнче виççĕмĕш вырăна тухрĕ.

– Ку маншăн пысăк çитĕнӳ. Тата та ытларах хатĕрленнĕ пулсан, тен, пĕрремĕш те пулаттăм-и? Чăвашсем калашле, мĕн пуррипе çырлахма пĕлмелле. Чи пахи – унта хутшăнса хамăн пултарулăха тĕрĕслени. Пурте чи çӳллĕ картлашка çине хăпараймĕç. Эпĕ хам авă чăваш чĕлхи урокне чăтăмсăррăн кĕтетĕп. Педагогăн кашни сăмахне ылтăн пĕрчипе танлаштарас килет манăн. Ӳкерме юратнăран халĕ чăвашла шухăшласа шурă хут çине çут çанталăка сăнлатăп. Кăмăла каять, – тет Света хавасланса.



***Элиза ВАЛАНС.***

Çĕрпӳ районĕ,
Первомайски.
**АВТОР сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Вулав тĕнчи

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

## «Сехетсен çĕр-шывне» çул тытар-и?




Пĕлĕт мар – шăвать, юхăм мар – иртет. Патшана та пăхăнмасть, тиеке те тăхтамасть. Мĕн пирки сăмах пырать-ха кунта? Тупсăмне шырама нумаях та пуç ватмалла мар. Вăл кашниннех пур, анчах унпа яланах кирлĕ пек усă курма, ăна хаклама пĕлместпĕр эпир. Çухатнăскерне каялла тавăраймастпăр. Ку, паллах – вăхăт.

Вăхăт шăвать те шăвать, самантлăха та чарăнмасть. Ăна улталаймăн, куççуль юхтарнипе те ӳкĕте кĕртеймĕн. Тĕлĕнмелле интереслĕ вăл: ĕçлекеншĕн нихçан та çитмест, юлхав çыншăн вара ытлашши.

Этемлĕх авалтанпах вăхăта висме хăнăхнă. Паянхи ансат, усă курма меллĕ сехетсене шухăшласа тупиччен мĕнлерех йышшисем пулнă-ши? Вăхăта йĕрлени мĕн парать пире? Çак тата ытти ыйтăва тинтерех Чăваш кĕнеке издательствинче пичетленсе тухнă «Сехетсен çĕршывĕнче» кĕнеке татса пама пулăшать. Унăн авторĕ сем – Юрий Сементер сăвăçпа Аристарх Дмитриев куçаруçă, редакторĕ – Галина Антонова, ӳнерçи – Светлана Бритвина. 1500 экземплярлă тиражпа тухнă кăларăма кĕçĕн çулхи ачасене халаллană. Вăл чăвашла тата вырăсла пулни питех те аван.

Сехетсен çĕр-шывĕ тĕлĕнмелле кăсăклă та пуян. Пĕр фактне илсе парар-ха: «Чи малтанах хĕвеллĕ сехет шухăшласа кăларнă. Вăл хĕвеллĕ кунсенче çеç ĕçленĕ. Çав сехет çинчи гномон ĕмĕлки ăçта ӳкнине кура вăхăт пĕлнĕ». Ĕлĕкрех шывпа ĕçлекен сехетпе те усă курнăмĕн. Ăна грексем шухăшласа тупнă, «клепсидра» тенĕ. Хайхискер «шыв сахалланса пынăçемĕн савăт çинчи цифрăсем тăрăх вăхăт пĕлме пулнă». «Вăхăт шыв пек юхать» çаврăнăш çавăнтан тымарланса тухать те ĕнтĕ.

Тен, хăйăр сехечĕпе сире тĕл пулма та тӳр килнĕ. Çунакан е çурта-сехет пирки илтнĕ-и-ха тата? Çук тăк кĕнекере вуласа пĕлме пултаратăр. Кĕске ăнлантарусăр пусне сехетĕн кашни тĕсĕ пиркиех сăвă илсе панă. Сăмахран:

*Шыв арманĕ пур пулсассăн*
*Шыв сехечĕ те кирлех:*
*Шыв юххи пĕр пек юхсассăн,*
*Çавăрсассăн тĕнĕле,*
*Йĕп туса вырнаçтарсассăн,*
*Ӳкерсессĕн циферблат*
*Çав сехет пире хавассăн*
*Тĕрĕс вăхăт кăтартать!*

Асăннă йĕркесене вырăсла та куçарнă. Эппин, «Сехетсен çĕршывĕнче» кĕнекепе чăваш кăна мар, вырăс шкулĕсенчи чăваш сăмахлăхĕн урокĕсенче те усă курма пулать. Вуланине ăша хывма капăр та ĕлккен ӳкерчĕксем пулăшаççĕ.

Кăларăмра сехетсемпе минутсем, талăк, циферблат тата ун çинчи цифрăсем пирки те тĕплĕн ăнлантарнă. Сехет пирки шахвăртса: «Чунĕ, ăсĕ-тăнĕ çук, хăй çавах ĕçлет. Урасăр утать, вырăнтан куçмасть», – тесе калаççĕ. Пĕр сăвăри лирика харкамçи вара уççăнах евитлет:

*Питĕ ăслă ман сехет, –*
*Вăл йăлтах, йăлтах пĕлет:*
*Ман хăçан вăранмалла,*
*Хăçан шкула каймалла,*
*Миçере таврăнмалла,*
*Миçере ярăнмалла, –*
*Пĕтĕмпех вăл вĕрентет,*
*Тавтапуç сана, сехет!*

Вырăнтан куçманни пирки те хирĕçлеме пултаратпăр халĕ. Автан-сехет пирки пупленĕ чухне ку сăнав тĕрĕслĕхне çухатать. Ара, усă саслă сар автан та ир çитнине систерсе, эппин, вăхăта пĕлтерсе, авăтать-çке-ха. Мĕншĕн ăна та сехетсен шутне кĕртес мар?

Вăхăт... Чылай чухне вăл нумай пек туйăнать. «Ĕлкĕрĕпĕр-ха, кайран, ыран...» – тетпĕр те манатпăр панă сăмаха. Тĕрĕссипе вара пĕр минута та сая ямалла мар. Ырă ĕç тума яланах хапăл тăмалла. Вăхăта хаклама мĕн ачаран вĕренмелле. Çак ĕçре шăпах Юрий Сементерпе Аристарх Дмитриев кĕнеки пысăк пулăшу парĕ.

***Ольга АВСТРИЙСКАЯ.***

ЫТАРЛĂН

## Чĕрери чулсем



Пĕр çын пасарта пахча çимĕç туяннă. Килне çитсессĕн сутуçăсем хăйне улталанине асăрханă. Лешсем лав çинчи михĕсене тавар вырăнне чулпа тултарнă. Этем каялла кайман, хуйха ӳкмен, унчченхи пекех лăпкă пурăннă.

Çапла, хĕрĕх çул иртсессĕн, асăннă çын килне ютран пырса шакканă. Алăк умĕнче шур сухаллă ватăсем тăнă.

– Ырă кун пултăр! Ĕлĕк эпир сана улталанăччĕ, çавăнпа та каçару ыйтма килтĕмĕр, – тенĕ вĕсем.

– Эп пит лайăх ас тăватăп ăна. Анчах чăрманма кирлĕ марччĕ: вăл чулсене эпĕ çав кунах тарăн шăтăка ывăтнăччĕ. Эсир вара вĕсене хĕрĕх çул чĕрере йăтса çӳренĕ, – хуравланă кил хуçи.

## Телей – хӳрере

Пĕррехинче ватă кушак аçи кушак çурие тĕл пулнă. Пĕчĕкскер хăй тавра çаврăннă, чупнă – хӳрине тытма хăтланнă.

Ватă кушак аçи шăп кăна сăнаса тăнă. Çамрăкки вара çаврăннă та çаврăннă, ӳкнĕ, тăнă, каллех хӳрине тытасшăн тăрăшнă.

– Мĕншĕн эс хăв хӳрӳ хыççăн чупатăн? – кăсăкланнă ватти.

– Телейĕм хӳрере тесе款ларĕç мана, çавăнпа тытасшăн та эпĕ ăна, – хуравланă кушак çури.

Ватă кушак аçи чеен кулса илнĕ (пурăнса курнă кушаксем çеç çапла пултараççĕ) те калаçăва малалла тăснă:



– Эп çамрăк чухне мана та каланăччĕ ку сăмаха. Хӳреме ярса тытас тесе нумай чупрăм ун хыççăн. Апат çимесĕр, ĕçмесĕр... Шав хӳрене хăваларăм. Вăйран ӳкеттĕм, тăраттăм та çĕнĕрен пуçлаттăм. Тахăш самантра хуйха ӳкрĕм те таплаттарса утрăм. Ăçталла куç тĕллет, çавăнталла çул тытрăм. Пĕлетĕн-и, ăнсăртран мĕн асăрхарăм вара?

– Мĕн? – тĕлĕнсе ыйтнă кушак çури.

– Эп кирек ăçта кайсассăн та ман хӳре хам хыççăнах пырать иккен.

***Вырăсларан***
***Ольга ИВАНОВА куçарнă.***

ТУЙĂМСЕН ЫТАМĔНЧЕ

### Кам халь эсĕ, эпĕ кам?

Кам халь эсĕ, эпĕ кам?
Хуравне ăстан тупам?
Ĕмĕр кĕтнĕ тĕл пулу,
Ăнланманлăх, уйрăлу...

Кам халь эсĕ, эпĕ кам?
Тен, эс – çĕр, эпĕ – утрав...
Уйăрать пире шыв-шур.
Шыв – куççуль, асап, хĕн-хур.

Кам халь эсĕ, эпĕ кам?
Тен, карап – эс, эп – çыран...
Шав ишетĕн малалла,
Çаврăнмастăн каялла.

Кам халь эсĕ, эпĕ кам?
Тен, хĕвел – эс, эп – тумлам...
Пит пăхсассăн тĕсесе
Çухалатăп именсе.

Кам халь эсĕ, эпĕ кам?
Çĕтрĕ манăн ăш салам –
Çитеймерĕ сан патна,
Вăратмарĕ куллуна.

### Шăллăма

Салам, Хĕветĕр тус, салам!
Саламлама ирĕк парсам –
Çыру яратăп аякран,
Тĕп хуларан, Шупашкартан.

Сăлтавĕ пур сăвăлама,
Почтальона чăрмантарма:
Çут тĕнчене эс килнĕ кун
Хăпартланмашкăн кăмăл пур.

Эс – ман пĕртен-пĕр пĕр тăван,
Нихçан та тухмăн асăмран.
Чĕкеç чĕлхиллĕ ыр Федюк,
Санран хакли никам та çук.

Ăш сăмахпа та кулăпа
Сирме пĕлетĕн хурлăха.
Пиллет-çке шанăç сан сассу,
Юнра-тăр шеп калаçассу.

Ваттипеле эс ватă пек,
Çамрăксемпе яш каччă пек.
Сан тĕслĕхӳ кӳрет хăват,
Тен, этем мар эс, чăн хăлат?

Эс килнĕ аслă Çĕр çине
Акмашкăн ырлăх вăрлăхне.
Аçу-аннӳшĕн пул тĕрек,
Таçта çитсен те кил килех.

Çутаттăр кун-çулна хĕвел,
Шевлийĕ саптăрччĕ телей.
Эс тивĕç чăн юратăва,
Ан пăрах çеç кĕтме, шанма!

Федюк, Хĕветĕр – Тур парни,
Мал ĕмĕтлĕ пурнăç çынни...
Саламласа уявпала
Сыв пуллашатăп çаплалла.

### Пирĕштие

Пачах юлмарĕ вăйăм-халăм,
Кĕçех, тен, кайăп-и тӳнсе.
Ăçта çухалтăн эс, хавалăм?
Ăçта çӳретĕн-ха сĕнксе?

Сар çунатна, ыр Пирĕштийĕм,
Мана хăв ытамна илсе.
Вĕçсе иртер-и çĕр-шыв çийĕн
Тĕнчемĕре куçпа виçсе?

Вара ĕненĕп – пур телейĕм,
Кайман ниçта та вăл çĕтсе.
Шанăç пулсан эп йăлт çĕнейĕп!
Çунатлă тус, пыр пиллесе!

***УЛЬПИ.***

Шупашкар.

# Хăшĕ чунлăрах, этем-и е чĕр чун-и?

Эпир, çынсем, Çĕр çинче хамăра хуçа евĕрех туятпăр. Пĕтĕм çут çанталăк пире пăхăнса пурăнать тейĕн. Каппайланса кайнипе чунлăх çине те алă сулатпăр.
«Çынсене мĕн чухлĕ лайăхрах пĕлетĕп, йытăсене çавăн чухлĕ ытларах хисеплетĕп», – тенĕ пирĕн эрăччченех пурăннă авалхи грек философĕ Сократ. Йытăсем пирки кăна мар, ытти чĕр чун çинчен те çаплах калас килет. Вĕсем этем пурнăçне çăлнă тĕслĕх сахал мар. Чылай чухне вара чĕр чун этемрен чунлăрах. Паян шăпах çавăн пек тĕслĕхсемпе паллашăпăр.



## 1. Кит дайвер-хĕре çăлнă.

Арктика бассейнĕнче ултă метр тарăнăшне ансан Янг Юнь урине шăнăр туртса лартнă. Вăл хăй хускалма пултарайманнине ăнланса илнĕ те хăраса кайнă.

«Мана сывлăш çитми пулчĕ, эпĕ аяларах та аяларах анма тытăнтăм. Вилĕм килнĕн туйăнчĕ. Сасартăк темĕнле хăватлă вăй мана çӳлелле тĕкнине ăнкарса илтĕм».

Мила ятлă кит мĕн пулса иртнине ăнланнă та хĕре вилĕмрен çăлса хăварнă.

## 2. Чĕр чунсен çирĕп туслăхĕ

Новокузнецк зоопаркĕнче тĕлĕнтермĕш ĕç-пуç пулса иртнĕ. Вăл виçĕ уйăха яхăн пĕр вольерта пурăннă Джессика йытă çурипе тата Апрель кашкăр çурипе çыхăннă. Кашкăр çурине амăшĕ йышăнман, çавăнпа ăна уйрăммăн пăхмалла пулнă. Халĕ вăл тăватă уйăхра. Йытă çури вара – çулталăкра. Чĕр чунсене пĕр читлĕхе хупнăранпа вĕсем çав тери туслашнă. Джессика юлташне чашăкран çиме вĕрентнĕ, ăна хăйĕн хӳттине илнĕ. Часах тусcене уйăрса янă. Йытă çурине çĕнĕ хуçасем илсе кайсан Апрель кунпа килĕшме пултарайман, выçă тытма пуçланă. Икĕ кун нимĕн те çимен вăл. Виççĕмĕш кунне Джессика таврăннă. Вăл хуçисенчен тарса пĕтĕм хула тăрăх çаврăннă, юлташĕ патне пĕрех çул тупнă.



– Алăк умĕнче Джессика курăнсанах питĕ тĕлĕнтĕмĕр, – тенĕ зоопарк директорĕ. – Вăл вара пурне те савăнăçлăн хамлатса сывлăх сунчĕ те Апрель патне васкарĕ. Халĕ кашкăрпа йытă каллех пĕр читлĕхре пурăнаççĕ. Эпĕ çавăн пек туслăх кинора кăна пулать тесе шутлаттăм. Пирĕн куç умĕнчех акă епле пулса иртрĕ...»

## 3. Пулăçа дельфинсем çăлнă

Ронни Дэбэл пулăçа дельфинсен ушкăнĕ вилĕмрен çăлнă. Япăх çанталăка пăхмасăрах Ронни пулă тытма тухнă, кимĕ çаврăнса ӳксен вăл чутах вилмен. Çак вăхăтра дельфинсен ушкăнĕ курăнса кайнă, пулăçа çурăм çине хурса çыран хĕрне çитернĕ.

## 4. Сысна чĕрепе аптăраса ӳкнĕ çынна пулăшнă

Лулу ятлă сысна Джо Энн Алцман пурнăçне çăлса хăварнă. Çав çын Пенсильвани штатĕнчи Преск-Айл хулинче каннă вăхăтра чĕрепе аптăраса ӳкнĕ. Урамра иртсе çӳрекенсенчен нихăшĕ те инкеке лекнĕскере пулăшма шутламан. Пĕр Лулу çеç лăпкă иртме пултарайман. Вăл пĕр-пĕр автомобиле чарас тесе çул варрине чупса тухнă та çавăнтах выртнă. Машина чарăнсан сысна унăн хуçине Джо Энн патне ертсе кайнă. Водитель çийĕнчех çăлав службине шăнкăравланă.

## 5. Дельфинсем серфингçăна акулăран хăтарнă

Çурла уйăхĕнчи пĕр шăрăх кун Тодд Эндрис юлташĕсемпе пĕрле серфингпа аппаланма шут тытнă. Хумсем çийĕн ярăннă вăхăтра таçтан вун пилĕк фут тăршшĕ акула тупăннă. Çак тискер пулă ар çынна çыртасшăн пулнă, анчах унăн çăварне серфинг хăми кĕрсе ларнă. Кайран тепĕр хутчен урине çăтса илесшĕн пулсан Тодд ăна пуçĕнчен тапма тытăннă, акула çаплах парăнман. Тодд вăйĕ пĕтсе çитнине туйсан пурнăçпа сыв пуллашма та хатĕр пулнă. Çав вăхăтра дельфинсен кĕтĕвĕ курăнса кайнă, акулăна çавăрса илнĕ те ăна этеме тапăнма паман. Вĕсен пулăшăвне пула Тодд хум тытса çырана ишсе тухма пултарнă.

## 6. Пăру кĕтӳçе çĕленрен сыхланă

Дженис Вольф çаранта кĕтӳ пăхса çӳренĕ. Сасартăк вун пĕр уйăхри Ватуси пăру унăн çулне пӳлнĕ. Вăл мĕншĕн çапла хăтланнине кĕтӳçĕ малтанах ăнланайман, пăрăва майракаран тытса хăваласшăн пулнă. Лешĕ вара ăна тĕксе каллех чăрмантарнă. Çĕр çинче çывăхрах çĕлен выртнă иккен. Ватуси хушша кĕмен пулсан вăл кĕтӳçе сăхма та пултарнă, Дженисшăн вара унăн наркăмăшĕ вилĕмпе танах.



## 7. Хуçа пан улмипе чыхăнсан

Хĕрĕх пилĕк çулти Дебби Паркхерст килте пĕччене пулнă. Пан улмипе чыхăнса кайсан вăл хăйне кăкăрĕнчен çапма тытăннă. Унăн йытти Тобби çакна тимлĕ сăнаса ларнă. Дебби питĕ япăх пулнине туйсан йытă ăна кăкăрĕнчен çапса пулăшма пикеннĕ. Тинех пан улми юлашкисем тухнă та хĕрарăм ирĕккĕн сывласа янă. «Эпĕ сывлама пуçланине курсанах Тобби мана пит-рен çулама тытăнчĕ», – тенĕ Дебби каярах.

# Катя Лычева – «ырă кăмăллăх элчи»



Катя 1974 çулхи çĕртмен вуннăмĕшĕнче ăслăлăх кĕçĕннĕсен çемйинче çуралнă. Ашшĕ-амăшĕ ăна пур енлĕн аталантарасшăн пулнă. Хĕр ача тăватă çултанах акăлчан чĕлхи вĕреннĕ, спортпа туслашнă, çав вăхăтрах ятарлă акăлчан тата ӳнер шкулĕнче вĕреннĕ, кинора ӳкерĕн-инĕ: («Чĕрĕ асамат кĕперĕ» (1982 ç.), «2 "а" класри çирĕп кăмăллă ача» (1984), «Бемби ачалăхĕ» (1985), «Лермонтов» (1986), «Килти ĕçсем еплерех?» (1987). Анчах тĕнче ăна актер ĕçĕсене пула мар, 1986 çулта Америкăна «ырă кăмăллăх элчи» пулса кайнăран пĕлет.

Катя Лычевăна темиçе ачаран суйланă. 1986 çулхи пуш уйăхĕн çирĕм пĕрремĕшĕнчен пуçласа ака уйăхĕн тăваттăмĕшĕччен вăл Сан-Францискори шкул ачипе Стар Роупа Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче тăрăх çӳресе пурне те миршĕн кар тăма чĕннĕ, Рональд Рейган президентпа тĕл пулнă.

«Пилĕк минутран Рейган господин килчĕ, аллине тăсрĕ те мана Шурă çуртра курма хапăл пулнине пĕлтерчĕ. Эпĕ ăна совет ачисем ăсталанă теттене парнелерĕм, пирĕн халăх миршĕн пулнине ăнлантартăм. «Çĕр çинче ядерлă хĕç-пăшал пур чухне ачасем лăпкă пурăнаймĕç пуль, – терĕм. – Эпĕ ӳссе çитиччен пирĕн çĕр-шыв мĕн пур ядерлă хĕç-пăшала пĕтерĕ. Çапла пулсан аванччĕ. Вара Çĕр çинчи пур ача та телейлĕ пулĕччĕ».

Президент, хăй тахçанах ача мар пулин те, мир пирки ĕмĕтленнине пĕлтерчĕ. Çак хăрушă хĕç-пăшал Çĕр çинче пачах ан пултăр тесе тăрăшма шантарчĕ...» – аса илет Катя.

Совет хаçат-журналĕсем çак хĕр ачана Самантăпа танлаштарнă. Ун çинчен тăтăшах статьясемпе сăн ӳкерчĕксем пичетленнĕ: «Катя Лычева пресс-конференцире», «Катя Лычева хутран кăвакарчăнсем тăвать», «Катя Лычева шкул ачисемпе тĕл пулнă»...

Хальхи вăхăтра Катьăна унăн хăш-пĕр тантăшĕсем çеç, 1980 çулхи шкул ачисем, ас тăваççĕ. Çапах вăл миршĕн тăрăшни паян та пире ырăрах пулма вĕрентет.

# Чечексем юратма та пĕлеççĕ



Нумай çул хушши ирттернĕ тĕпчев ĕçĕсенчен çакă паллă: йывăç-курăк та, чечексем те курма, туйма, илтме тата пĕр-пĕр пулăм пирки ас туса юлма пултараççĕ. Яппун ăсчахĕсем йывăçсен, пахча çимĕç культурипе чечексен электрон хумханăвне çыртарнă та вĕсене компьютер пулăшнипе сасă чĕлхине куçарнă. Хăйне евĕр симфони янăраса кайнă. Ку вăл ӳсен-тăрансем калаçма тата таврари пулăмсене хирĕç хурав пама пултарнине çирĕплетет.

Юрă-кĕвĕ чечексемпе пахча çимĕç культурине мĕнле витĕм кӳнине чылай вăхăт хушши сăнанă ăсчахсем çапла пĕтĕмлетӳ тунă: ӳсен -тăрансем илтеççĕ кăна мар, кашни кĕвве хăйне евĕр йышăнаççĕ. Тĕслĕхрен, техно-рок янăраттарнă чухне фасоль çулçисем куç умĕнчех пĕтĕрĕнсе лараççĕ, классика кĕввипе вара чĕрĕлсе тăраççĕ. Бахăн «Бранденбург концерчĕпе» вăл икĕ хут хăвăртрах ӳсет. Клумбăри чечексене вара джаз килĕшет. Çак кĕвве «итлекен» гиацинтпа примула çеçкисем хăвăртрах çурăлаççĕ, вăрахчен тăкăнмасăр лараççĕ. Çавăн пекех пысăк чечексем Вагнер тата Моцарт кĕввине юратни паллă. Ăсчахсемшĕн ӳсен-тăранăн туйăмлăхне уçни пысăк çитĕнӳ пулнă. Чечек йăранĕ çынна ăнланма та, юратма та пĕлет иккен.

Тата çакăн пек сăнав туса иртернĕ. Ăсчахсенчен пĕрне пӳлĕме кĕрсе чечек çулçине хуçса илме хушнă. Ӳсен-тăран хăйне нушалантараканран хăрани унпа çыхăнтарнă монитор çине тӳрех çырăнса тухнă. Сăнава хутшăнакан тепĕр çынна вара, чечексене юратса пăхаканскере, фикус çав тери килĕштернĕ. Вăл пӳлĕме кĕрсенех тăрук чечекĕн «кăмăл-туйăмĕ çĕклентсех кайнă» (çакă компьютер экранĕ çинчи йăлтăрка хĕрлĕ йĕрсенчен паллă). Çулçисене тусанран тасатнă чухне вара унран телейли те çук тейĕн! Ӳсен-тăран кĕвĕçме пĕлнине асăрхасан ăсчахсем шалт тĕлĕннĕ. Чечеке пăхакан патне ĕçтешĕ пырса тăрсанах монитор çинче тĕксĕм йĕр чупма пуçланă-çке.

**Туссем, чечексемпе асăрханулăрах пулăр, ан кӳрентерĕр! Сирĕн юратăва туйсан вĕсем ешерсе, çеçке çурса кăмăлăра çĕклĕç, тунсăх пирки те манса кайăр вара.**

**Ыран Сочире Хĕллехи XXII Олимп вăййисем пуçланаççĕ. Спортсменсене çĕнтерÿ сунатпăр!**

# Хĕллехи Олимп вăййисем



**Ыран пирĕн çĕр-шывра чăннипех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăрту старт илĕ. Хĕллехи XXII Олимп вăййисем пуçланĕç. Сочире иртекен Олимпиадăна пурĕ 90 ытла çĕр-шывран килнĕ спортсмен хутшăнĕ, вĕсем 15 тĕрлĕ дисциплинăра вăй виçĕç.**

Хĕллехи Олимп вăййисем пĕрремĕш хут 1924 çулта Францири Шамони хулинче иртнĕ. Малтанах унта вун ултă çĕр-шыври 300 ытла спортсмен хутшăннă. Вĕсем йĕлтĕрпе ярăнса, конькипе хăвăрт чупса, хоккейла выляса вăй виçнĕ. Унсăр пуçне мăшăрпа е мăшăрсăр конькипе те ярăннă. СССР спортсменĕсем вара хĕллехи Олим вăййинче пĕрремĕш хут 1956 çулта хутшăннă.

Çулсерен хĕллехи Олимп вăййисене хутшăнакансен шучĕ ÿссе те ÿссе пынă, çĕнĕ "çăлтăрсем" çуралнă. Кашни çĕр-шыв каччи, хĕрĕ малти вырăна йышăнас тесе вăй çитнĕ таран тăрăшнă.

Хĕллехи Олимп вăййисен маттурĕсемпе паллашар-и? Медаль çĕнсе илессишĕн чылай тар тăкнă вĕсем. Историе çырăнса юлнă-ха, анчах вĕсене пурте пĕлмеççĕ.

## Чеелĕх пулăшнă

1968 çулта Францири Гренобль хулинче хĕллехи Х Олимп вăййисем





иртнĕ. Кунта чи пĕлтерĕшлĕ ăмăрту 50 километра йĕлтĕрпе чупассинче пулнă. Медаль çĕнсе илессишĕн чăн-чăн тупăшу пынă. Çирĕм пилĕк километр хыçа юлнă. Норвеги спортсменĕ Эллефсэтер пĕрремĕш пырать. СССР йĕлтĕрçисем чылай хыçалта. Вячеслав Веденин – тăххăрмĕш, Игорь Ворончихин çирĕммĕш, ун хыççăн Анатолий Акентьевпа Владимир Воронков пыраççĕ.

40 километра çитсен те малта Эллефсэтер. Иккĕмĕш унăн ентешĕ Тилдум пырать, виççĕмĕш вара – Веденин. Вăл ултă спортсмена хăваласа çитсе иртсе кайнă. Çапах малти вырăна тухма пултарĕ-ши? Акă финиш. Вячеслав Веденин иккĕмĕш çитет. Кĕмĕл медаль чăннипех те лайăх. Чылайăшĕ 26 çулти Веденин «ылтăн» çĕнсе илессине кĕтнĕ. Тăватă çултан тепĕр Олимпиада иртĕ. Вăл унта хутшăнĕ-ши?

1972 çул. Япони. Саппоро. 30 километрлă дистанцире ылтăн медале Вячеслав Веденин çĕнсе илнĕ. Вăйне кирлĕ пек усă курма пĕлнĕ-çке вăл! Ăмăрту пуçлансан йĕлтĕрçĕ Норвеги спортсменĕ хыççăн пынă, кайран унран иртсе кайнă та финиша пĕрремĕш тухнă.

Малалла эстафета. Тăватă спортсмен вуншар километр чупать. Ку ăмăрту ыттисенчен чылай пĕлтерĕшлĕ çав. Унта çĕнтерни темрен хаклă. Юлашкинчен Веденин чупать. Малта Норвегири чи лайăх йĕлтĕрçĕ Харвикен пырать. Хыçалтан Лундбакк швед хăвалать. СССР йĕлтĕрçисем «кĕмĕле» е «бронза» тивĕçĕç? Харвикен пĕр минут малта. Унăн команди пĕрремĕш вырăна тухассине паллă тума пуçланă та ĕнтĕ, пурте савăнаççĕ, пĕр-пĕрне ыталаççĕ. Ялав йăтнă спортсменсем финиш патĕнче кĕтеççĕ. Часах Харвикен килет... Унта вара СССР спортсменĕ Вячеслав Веденин пырать. Вăл Норвеги йĕлтĕрçине хăваласа çитсе иртсе кайнă.

Çак ăмăртура Веденин чылай тар тăкнă-ха, анчах кунта пĕр вăрттăнлăх пур. Эстафета умĕн Вячеслав Веденин йĕлтĕрне маçпа сĕрнĕ пек тунă. Харвикен Норвеги йĕлтĕрçи çакна курса хăйĕнне сĕрме тытăннă. Анчах маç урăх тĕрли пулнă... Çапла вăл выляса янă та.

## Ăна çитекенни никам та çук

СССР спортсменĕсем спортăн ытти тĕсĕнче те чылай çитĕнÿ тунă. Сăмахран,



Лидия Скобликова. 1960 çулта Скво-Вэллире çирĕм пĕррери спортсменка конькипе 1500 метра, унтан 3000 метра чупса тĕнче рекордне кăтартнă. Тăватă çул иртсен Лидия Инсбрукра абсолютлă Олимп чемпионки ятне тивĕçнĕ. Унăн рекорчĕсене çитекенни халĕ те никам та çук.

## 39 çулта та «ылтăна» тивĕçнĕ

Совет Союзĕн йĕлтĕрçи Раиса Сметанина Олимп пьедесталĕ çине вунă хут тăнă! Унăн пухмачĕнче – 4 ылтăн, 5 кĕмĕл тата 1 бронза медаль. Хĕллехи Олимп вăййисен историйĕнче кун пек рекорд пулман. Раиса Сметанина хĕллехи пилĕк Олимпиадăна хутшăннă, кашнинче наградăна тивĕçнĕ. 1993 çулта Альбервилльте 39 çулхи йĕлтĕрçĕ финиша пĕрремĕш çитнĕ. Вăл паянхи кунччен йĕлтĕрпе чупассинче чи аслă Олимп чемпионки шутланать.





Раиса Сметанина ăмăртусене хутшăнма пăрахнă пулсан та спортпа сыв пуллашман. Вăл Комири спорт шкулĕнче çамрăк хĕрсемпе каччăсене çитĕнÿ патне талпăнма хавхалантарать.

## Чи чаплă биатлонист

Çапла, Александр Тихонов – тĕнчери



чи чаплă биатлонист. Вăл тăватă хут Олимп чемпионĕ, вун виçĕ хут Тĕнче чемпионĕ пулнă.

19 çулти каччăна Олимпиадăна каймашкăн Совет Союзĕн пĕрлешнĕ командине кĕртнĕ. Вăл эстафетăра пĕрремĕш тапхăра чупнă. Финиша та пĕрремĕш çитнĕ. Тепĕр ăмăртура вăл «кĕмĕле» тивĕçнĕ. Малашнехи Олимп вăййисенче вăл пĕртте парăнман, ылтăн медальсене çеç çĕнсе илнĕ.

## Фактсем:

– Хĕллехи пĕрремĕш Олимпиадăна 13 хĕрарăм çеç хутшăннă. Вĕсем пурте



конькипе ярăнассинче вăй виçнĕ. Кунта 11 çулти Норвеги хĕр ачи Соня Хени хутшăннă. Соня юлашки вырăн йышăннă пулсан та, иккĕмĕш тата виççĕмĕш хут иртнĕ хĕллехи Олим вăййисенче ылтăн çеç çĕнсе илнĕ.

– 1936 çулта Олимп вăййисем пуçланнă кун çулăм çутас, вĕçленсен – ăна сÿнтерес йăла çуралнă. Çулăма пĕрремĕш хут Гармиш-Партенкирхен нимĕç хулинче Адольф Гитлер çутнă.

– Сенкер экранпа Олимп вăййисен ăмăртăвĕсене 1956 çулта кăтартма пуçланă.

– Пĕрремĕш хут хĕллехи Олимпиадăн официаллă талисманне Австрири Инсбрукра иртнĕ XII Олимп вăййинче кăтартнă.



Вăл Тиролин юр кĕлетке пулнă.

– 2006 çулта Туринра иртнĕ хĕллехи Олимпиадăра 80 çĕр-шывран 2508 спортсмен хутшăннă. Çак Олимп вăййисем историе чи йышлă пулнипе çырăннă. Каласа хăвармалла: пĕрремĕш хут хĕллехи Олимпиадăна Эфиопи тата Мадагаскар спортсменĕсем хутшăннă.

***Ирина КОШКИНА хатĕрленĕ.***

## Олимп çулăмне тытса куртăмăр!

Нарăсăн виççĕмĕшĕнче пирĕн шкула Олимп çулăмĕ килсе çитрĕ. Ăна илсе килекенĕсем – «Хастар» физкультурăпа спорт комплексĕн ертÿçи Вячеслав Витальевич Дадюков тата вĕренÿ пайĕн ертÿçи Алексей Юрьевич Порфирьев. Районти шкулсенчен пирĕн пата пĕрремĕш килчĕç, факел çинчен каласа пачĕç. Вăл 800 грамм таять. Олимп вăййисем çинчен те пĕлтĕмĕр. Кăçал вĕсем Раççейре иккĕмĕш хут иртеççĕ иккен. Пĕрремĕшĕ 1986 çулхи çулла Мускавра пулнă.

Çак кун пирĕнтен кашниех факел тытса курма пултарчĕ. Хăнасем кайсан вăйăсем вылярăмăр. Пур ача та савăнчĕ!





***Наташа МИХАЙЛОВА,*** ***5 класс.***

Хĕрлĕ Чутай районĕ, Штанаш шкулĕ.

# Салтак пурнăçĕ

## Калав

Геннадий ЭСЕКЕЛ

*(Малалли. Пуçламăшĕ 4-мĕш номерте)*

Сикмелли вăхăт çитрĕ. Пире икĕ АН-2 самолет кĕтет. Вун икĕ çамрăка пĕр рете тăратрĕç. Инструктор тĕрĕслевĕ хыççăн эпĕ пĕрремĕш. Ыттисенчен йывăртарах пулнăран уçлăха манăн чи малтан утăм тумалла.

Сомолет хускалчĕ те кăштахран эпир сывлăшра пулнине туйса илтĕм. Сигнал парсан инструктор мана алăк çывăхнерех чĕнчĕ. Çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те эпĕ икĕ енчи хашаксенчен тытса çĕрелле пăхрăм. Тĕлĕнмелле хитрелĕх хуçаланать аялта. Ӳкерчĕкри пекех. Аэродром площадки курăнчĕ. Часах сикмелле. Кăштах аяккарах тем сарлакăш Атăл шывĕ курăнать. Инструктор шыва ӳкесрен стропасем пулăшма пултарнине манмалла маррине ас тутарчĕ. Çурăма кăшт тĕксе илсен уçă алăкран тыткăна илнĕ илем тĕнчи ытамне вĕçрĕм. Самолетран çаклатнă карабин хăех парашюта уçса ячĕ. Тĕлĕнмелле ырă туйăм çавăрса илчĕ. Калама сăмахăм çитмест. Тĕлĕкри пек туятăн хăвна. Мĕн пĕчĕкрен тĕлĕкре ялан вĕçеттĕмчĕ, халь чăннипех ырлăхра ярăнатăп... Чăн пурнăç саманчĕн халапĕ.

Аялтан хыттăн кăшкăрни илтĕнет. «Хатĕрленĕр, часах çĕре анса ларатăр! Урасене тикĕс тытăр!» Чăн та çывхарнăçемĕн çĕр таçта аякалла тарать тейĕн. Тата питĕ хăвăрт тарать! Çав вăхăтра çухалса каймалла мар, хăрасси çинчен манмалла, вара ăнăçлăн тăван çĕрпе чуп тăвăнса илетĕн... Çĕр çине анса тăрсан шалти мăнаçлăх туйăмĕ вăранать, хăвна юмахри Улăп вырăнне хуратăн. Ниçта шăнăçми савăк кăмăл, хастарлăх хускалать, чăнласах юмах тĕнчи...

Хĕрĕхе яхăн яш хушшинче Тюрин хушаматлă йĕкĕт тĕлĕнтерчĕ. Кĕрнеклĕ, патвар çамрăк темле ӳкĕтлесен те самолетран тухса вĕçес темерĕ. Инструктор ăна тапса та пăхрĕ – усси пулмарĕ. Питĕ çирĕп çатăрласа тытнă алăсем самолет алăкĕн хашкане ниепле те вĕçертмерĕç. Хăравçă çамрăкран ытти ачасем те ахăлтатсах кулчĕç. Кăшт намăслантăр тесе ăна хĕр-спортсменсемпе сывлăша хăпартрĕç. Шел, хăравçăлăхне кун пек те парăнтараймарĕ. Пулас десантниксен списокĕнчен чĕрсе хучĕç. Пĕр кунра виçĕ хутчен сикрĕмĕр. Тулли кăмăлпа хулана таврăнтăмăр. Кашнине десантник значокне парнелерĕç.

Тепĕр кун манăн каллех военком патне кĕмелле пулчĕ. Завода тепĕр хут вырнаçмалла-çке. Унталла-кунталла çӳрекен çамрăка каялла илмессе те пултарĕç. Пурăнмалли те кирлĕ. Тен общежити парĕç?

Военком завода шăнкăравласа калаçрĕ.

Пурте йĕркеллĕ, ыранах ĕçе тухмалла, общежитире пӳлĕм шантарнине те пĕлтерчĕ. Ăна тав туса завода вĕçтертĕм. Хĕсмете кайма кун çитиччен кунта çур çул ĕçлерĕм. Питех те кирлĕ çын пулса тăтăм иккен эпĕ. Мана çурт-йĕр купаланă чухне тимĕр патаксене тăстарса чăтăмлăхне тĕрĕслекен цехра ĕç вырăнĕ пачĕç. Çав патаксене çыхăнтарса каркас тунă хыççăн формăна яраççĕ. Эпĕ çак ĕçе лайăх хăнăхса çитрĕм. Çавна курах ĕнтĕ мана бригадир тивĕçне пурнăçлама куçарасшăн та пулчĕç. Килешмерĕм. Çавах кĕркунне çара ăсанмалла. Профсоюз ĕçне явăçтарасшăн пулчĕç – унта та килĕшмерĕм. Заводра йĕркелекен концертсенче юрлама вара хирĕç пулман. Кашни юрăпа халăх умне икĕ хутчен тухма ыйтатчĕç. Чĕмпĕрте концертра çитмен вырăн хăварман. Манăн çитменлĕх пурччĕ – нотăсене вулама пĕлместĕмччĕ. Шкулта пире музыка таврашне ăнкарма вĕрентмен. Çирĕммĕш çулсенче пирĕн Тăхрьял таврашĕнче Иван Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнă учительсем ĕçленĕ. Вĕсем пурте сĕрме купăспа нотăпа юрлама вĕрентнĕ. Çар хĕсметне кайиччен манăн музыка грамотине вĕренсе юлас килчĕ. Çурла уйăхĕн вĕçĕнче Чĕмпĕрти музыка училищине çитсе тĕрĕслентĕм. Юрă-вокал уйрăмне кăçхи сменăна илчĕç. Хăвăрт кăна экзамен тытма тиврĕ. Одессăри консерваторире вĕреннĕ Анастасия Феофиловна Савицкая вокал педагогĕ патĕнче икĕ уйăх юрлама хăнăхрăм. «Виçĕ çул вĕренсен эпир санпа Саратови консерваторие кĕме хатĕр пулатпăр та», – тетчĕ.

...Хĕсмете каймалли кун çитрĕ. Чĕмпĕрти чукун çул вокзалĕ умне Вăтам Атăл округĕнчен пухăннă çамрăксене тавар турттаракан вакунсене чыхса тултарчĕç. Чĕмпĕрĕн пулас десантникĕсене пĕр вакуна вырнаçтарчĕç.

Вакунра выртса канмалли путмар та, сак та пур. Эппин пире аякри вырăна илсе каяççĕ.

Эрне ытла, чылай хулара пуçтарнă çамрăксене тултарнă состав, поезд кустăрмисен сасси хăлхана йӳçĕхтернĕн Белоруссипе Литва чиккинче вырнаçнă Барановичи хулинче тинех шăпланчĕ. Çак хушăра эпĕ йĕркеллĕ çывăрса курман. Ялан чӳрече витĕр тавралăха сăнаса пыраттăм.

Барановичире призывниксене тĕрлĕ çĕре ăсатмалли (распределительнăй) пункт иккен.

Вăрăм çула кĕскетме çывăх паллашнă Шутов аслă лейтенант Чĕмпĕр çамрăкĕсене ăсатаканскер, ман документсене комисси членĕсен патне илсе кайрĕ.

– Сана лайăх командăна вырнаçтаратăп, – терĕ. – Эпĕ киличчен çывăрма пултаратăн. Кравать айне кĕрсе вырт. Таврăнсан вăрататăп.

Вăл вăрçă пуçлансан Украинăран эвакуаципе илсе килнĕ еврей ачи пулнă. Дмитровград хулинчи тăлăх ачасен çуртĕнче ӳснĕ. Çул çинче вĕсен эшелонне нимĕç самолечĕсем бомба пăрахса ним юлми çĕмĕрсе тăксан амăшĕпе пĕчĕк шăллĕ вилмеллех аманнă. Улттăри ача станцăра чарăннă составран кăштах аяккарах пăрăнса утнăскер, сывă юлать. Вăл манпа уйрăмах кăмăллăн калаçатчĕ, ентеш тетчĕ. Эпĕ çул çинче хама лăпкăн тытни ăна килĕшнĕ пулмалла. Вăл состав çумĕнчи пĕртен-пĕр пассажир вакунĕнче, офицерсен йышĕнче çĕр каçатчĕ.

Шутов офицер самай вăхăтран таврăнчĕ. Эпĕ те канса илтĕм. Пин çын шавĕнче те çывăрма пулать иккен. Аслă лейтенант документсене таварса пачĕ. Мана вăл медиксен йышне çырăнтарнă. Эпĕ ăна чунтан тав турăм. Ветеринарипе медицина пĕр специфика-çке.

Рупорпа медиксен ушкăнне пĕр çĕре пухăнма чĕнчĕç. Кăткă йăвинчи пек хĕвĕшекен çамрăксене пысăк залран мунчана илсе кайрĕç. Шутов юлташпа ăшшăн сыв пуллашрăмăр. Хура куçлă, тĕм хура çӳçлĕ еврей çынни халь те куç умĕнче.

Мунчара çăвăнса тухсан пире вĕр çĕнĕ тум валеççе пачĕç. Тăхăнтăмăр. Куçкĕски витĕр пăхсан та хамăра хамăр палламастпăр. Ют çын пăхать тейĕн сан çине. Урама тухса пĕр çĕре пухăнма хушрĕç. Тент карнă грузовик çитсе чарăнчĕ. Вырнаçма команда пачĕç. Таврара пĕрремĕш черчен юр çума пуçларĕ. Хăпарса лартăмăр. Машинăна шăнăçман çамрăксем пире юрпа пеме пикенчĕç. Хытарнă юр муклашки тутар ачин куçĕнчен лекрĕ. Самаях хытă лектернĕ пулас. Çамрăка медпункта ăсатрĕç. Машина хускалчĕ. Пирĕн çул малалла.

Медиксене çураçтарнă Галабир капитан калаçма юратман чĕмсĕр этем. Пире ăçта çити илсе каяссипе кăсăкланакансене «Молчать», – терĕ. Пурте чĕмсĕрленчĕç. Пирĕн çине хаяррăн пăхса илчĕ те тента карма хушрĕ. Хăй кабинăна ларчĕ. Хускалтăмăр. Машина ытла тикĕс çулпа чупнинчен тĕлĕнсе пыратпăр.

Таврара сĕм тĕттĕм. Пурте шăпланчĕç. Хăшĕ-пĕри тĕлĕрет. Пуçра тĕрлĕ шухăш çаврăнать. Патефон çатми тейĕн. Виçĕ çуллăха ирĕклĕхпе сыв пуллашатпăр-çке. Нумайăшĕ хаш! та хаш! сывлать.

Сехете яхăн пынă хыççăн вăрмансене тӳрем вырăнсем улăштарчĕç. Çĕрлехи сĕмлĕхре уйрăм ларакан хуторсем курăнма пуçларĕç. Хăш-пĕр хутор ушкăнне латинла сас паллисемпе çырнă. Чикĕ урлă каçманске? Польшăна мĕнле лекнĕ-ха тесе тĕлĕнетпĕр. А-а! Балтика тăрăхĕ. «Литва!» – сас пачĕ пĕри. Литвана çитсе кĕтĕмĕр иккен.



Кăштахран Каунас хулин çутисем курăнчĕç.

«Вăранăр! Хулара хĕсметре пулăпăр!» – савăнса кăшкăрчĕ тахăшĕ. Пурте тĕрлĕ еннелле пăхкалатпăр.

Пирĕн грузовик Неман юхан шыв хĕрринчен инçех мар вырнаçнă кирпĕчрен купаланă горнизонра, икĕ хутлă казарма умĕнче тăп чарăнчĕ. Галабир капитан кабинăран пуçне кăларса тĕл пулнăранпа иккĕмĕш сăмах вĕçертсе хучĕ: «Анăр!» Тент айĕнчен хăтăлса казарма умĕнчи асфальтлă плаца сиксе антăмăр. Кĕтӳçсĕр юлнă сурăхсем пек пĕр çĕрте кĕпĕрленсе тăратпăр.

– Икĕ рете тăрăр! – сăмах шутне ӳстерчĕ капитан.

Йĕркеленсе тăтăмăр. Малалла мĕн пуласса кĕтнĕ вăхăтра мĕн çырнине вулатпăр: «Десантниксен медицинăпа санитари батальонĕ. Вĕренӳ корпусĕ».

– Казармăна шагом марш! – пулчĕ команда.

Казармăна стройпа кĕрсе тăтăмăр. Ялав умĕнче, тумбочка çумĕнче, постра çăварĕ çурăлса каясла анаслакан часовой тăрать. Каçхи тăмана куçĕ пек чамасăр чарăлса кайнăскерĕн куçĕнченех пире вĕсем халех килсе çитессе кĕтменни паллă ку. Таçти кĕтесрен хыткан кĕлеткеллĕ старшина тухрĕ. Вăл ытла тĕлĕннĕскер, çухалса кайнă сăнĕпе пыйтланнă евĕр унтан-кунтан хыçкаланса илчĕ те кукшаланма пуçланă пуçне, юлашки çӳç пĕрчисене çăлса ывăтасла кăтăр-кăтăр хыçма пуçларĕ. Эпир, команда панă евĕр пурте харăссăн кулса ятăмăр. Çиленнĕ старшина пирĕн çине шурă куçĕпе тирĕнчĕ. Галабир капитан казармăна пирĕн хыççăн кĕнĕскер, çак хăтланусене куç айĕн сăнаса тăраканскер, сăмах хушмасăр списока тĕлĕрекен старшинана тыттарчĕ. «Апатлантарăр!» – команда пачĕ вăл юлашки сăмахне. Хăй хыçĕнчен такам хăваланă евĕр, алăкран хăвăрт кăна тухса сирпĕнчĕ.

– Çак ушкăна ман мĕн çитерес? Столовăйра нимĕн те çук. Çитменнине сире кĕтмен те! – капитан хыçĕнчен кăшкăрчĕ вăл çурăк чана аса илтерекен çинçе сассипе.

– Шыра, туп! Апатлантар! – пуçне алăкран кăтартса кăшкăрчĕ капитан хăйне хирĕçлекене чăтма пултарайман сасăпа.

Çăварне çерçи вĕçсе кĕресле карса пăрахнă, куçне хупма маннă старшина пĕр вырăнта хытса тăчĕ. Тем шухăшларĕ. Пуç тӳпине ласкарĕ. Пирĕн строй арканма пуçларĕ. Лах-лах-лах кулă...

– Строя тăрăр! – ялт! сиктерсе çухăрса ячĕ вăл çинçе-çурăк сассипе.

Йĕркене кĕтĕмĕр. Строй умне каçăрăлса тăчĕ те списока вулама пикенчĕ. Хăшĕ-пĕри каллех кулма хăтланчĕ. Вăл вĕсем çине куç айĕн пăхса илчĕ те малалла калаçрĕ.

– Эпĕ старшина-сверхсрочник. Хуçалăх ыйтăвĕсемпе ĕçлекен çын. Ман хушамат Гербарикас. Эпĕ сирĕнпе икĕ-виçĕ кун анчах пулатăп – командирсем ĕçе тухиччен. Пулас старшина отпускра, вăл килсе çитеймен-ха. Çавăнпа та манăн командăсене итлеме ыйтатăп.

Пурте шăпланчĕç.

Гербарикас хушаматсене вулама пуçларĕ. Ерипен, кашни хушаматăн кайри сыпăкĕ çумне «кас», «кус», «чюс» сыпăк хушать. Каллех пурте кулса ытăнчĕç. Маршак хушамат халь Маршакус, Маршиц-Лифшицюс, Федоров – Федоровскас, Перов – Перовскас пулса тăчĕç. Шел, ман тата тутар ачин хушамачĕсем çумне нимле сыпăк та çыпăçтараймарĕ. Пурте хырăмĕсене тытса кулчĕç. Нумайăшĕ литовец пулса тăчĕç. Старшина вуланă списокран çур состав украинсем, тепĕр çур состав вырăссем пулни паллă пулчĕ. Тепĕр пиллĕкĕшĕ – еврей, эпир иккĕн – тутарпа чăваш.

Хырăм выççи кастара пуçларĕ. Çул çинче илнĕ апат-çимĕç тахçанах хырăмра ирĕлсе пĕтнĕ ĕнтĕ. Салатса панă сухой паек текеннин шăрши те юлман. Хăшĕ-пĕри йăйкăшма хăтланчĕ.

– Ан чĕнĕр! – татса пăрахрĕ старшина хăйĕн çурăк сассипе.

Вăл самантлăха шухăша путрĕ.

– Ман хыççăн шагом марш! На выход! – команда пачĕ вăл хастарланса.

– Ăçта илсе каять-ши вăл пире? – тĕлĕнеççĕ пурте.

Казармăн тепĕр вĕçĕнче столовăй иккен. Çав хутлăха та старшина стройпа илсе çитерчĕ. Зала кĕрсен пурте сĕтелсем хушшине вырнаçса ларчĕç. Кĕтетпĕр. Мĕн те пулса тупса параççĕ-ши, лартаççĕ-ши сĕтел çине выçă кашкăрла пăхакан çамрăксен умне?

Старшина икĕ-виçĕ çамрăка чĕнсе илсе кухньăра çухалчĕ. Кăштахран залра тутлă шăрша сарăлчĕ. Çăвара сурчăк капланса пухăнчĕ. Çамрăксем подноссемпе касса тултарнă салă татăкĕсем йăтса тухса сĕтелсем çине лартрĕç. Салă çинчен куçа илмесĕр шăпăрт пăхса ларатпăр. Пĕр çăкăр татки те курăнмасть. Кĕтетпĕр.

– Çийĕр! Мĕн хăнари пек кĕтсе ларатăр?! – кăшкăрчĕ старшина, амбразура тăваткăлĕнчен çӳхе питне кăтартса.

Украина ачисем нумай шутласа лармасăр çăвар тулли салă çирĕç. Пирĕн вĕсене пăхса куçсем çамка çине хăпарчĕç тейĕн.

Выçă хырăмпа казармана таврăнтăмăр. Тимĕр кравать çине салтăнмасăрах выртса икĕ-виçĕ сехетлĕхе ыйха путрăмăр.

Ирхине ултă сехетре казармăна часовăйăн «Подъем!» команди янăратрĕ. Кăткă йăвине хускатнăн кĕшĕлтетӳ пуçланчĕ. Пит-куçа сивĕ шывпа йĕпетнĕ-йĕпетмен «строя тăрăр!» команда илтĕнчĕ. Хохол ачисем строя тăмасăр урамри туалета вирхĕнчĕç. Эпир, салă çимен çамрăксем, вĕсенчен ахăрса-кулса юлтăмăр.

– Шăпăрт! – илтĕнчĕ старшинан çурăк çинçе сасси.

Гербарикас старшина вăхăтлăх вырăн таврашĕ салатса пачĕ. Кравачĕсене мĕнле сарса пуçтармаллине кăтартрĕ. Плац çине илсе тухса стадион тавра чуптарчĕ, гимнастика тутарса аппаланчĕ. Апата илсе кайрĕ. Хура тулă пăтти пĕçернĕ. Расписанипе паллашрăмăр. Занятисем сакăр сехетре пуçланаççĕ. Анчах пирĕн командирсем килсе çитеймен-ха. Гербарикас старшина хăй пĕлнĕ пек пире кунĕпе унталла-кунталла хăваласа çӳрерĕ: туалет тасаттарать, казарма тавра йĕркене кĕрттерет, кухньăна çĕр улми шуратма чĕнет. Никама та ĕççĕр лартмасть. Кашнин валли мĕн те пулин тумалли тупать.

**(Малалли çитес номерте).**

# Хаваслă 2014 самант

## Ребуссем




Ребусра – ваттисен сăмахĕ.




Ребусра тупмалли юмах.

## Рифмăланă йĕркесем

Настук касрĕ ман пата
Халапсем çапса ларма.

Çуркунне улма лартатпăр,
Кĕркунне çисе ларатпăр.

Кушаксем мăр-мăр тăвассĕ,
Кăлпасси çисе ларассĕ.

Тухрăм эпĕ урама –
Курах кайрăм тантăша.

Аннене эп юрататăп,
Чун-чĕререн савăнатăп.

Кукамая пулăшатăп
Чашăк-тирĕке çăватăп.

Чăх-чĕпе тыр-пул паратăп,
Урайне çума васкатăп.

Пиччене пит хисеплетĕп,
Ун пек пуласшăн çӳретĕп.

Хĕвел ман çине пăхать,
Чĕлхине вăл кăтартать.

Ирхине ирех тăратăп,
Унтан шкулалла васкатăп.

Тăххăрта эпĕ выртрăм,
Хитре тĕлĕксем куртăм.

Киносем эпир пăхатпăр,
Тĕлĕнсе пăхса ларатпăр.

Пуканесем юрататăп
Вĕсемпе эп вылятăп.

Эпĕ спорта юрататăп –
Туслă унпа пурăнатăп.

Ав килеççĕ ĕнесем –
Ăшă сĕт парас вĕсем.

**Юля КУЗЬМИНА.**

Кĕнекесем вулатăп,
Тĕрлĕ çĕрте пулатăп.

Çунашкапа ярăнатпăр,
Çил ачипе ăмăртатпăр.

Утрăмăр, чупрăмăр,
Кĕçех шкула çитрĕмĕр.

Паян шкула каймалла,
Учителе курмалла.

Киле ĕç параççĕ,
Ачасем ăна тăваççĕ.

Тăхăнтăм та калпака,
Хупрăм хыççăн алăка!

Шурă юр хуллен ӳкет,
Таврана пустав витет.

**Маша КОШЕЛЕВА.**
Йĕпреç районĕ,
Çăкалăх.

**–Пă сыпăка кăларăр та ваттисен сăмахĕ вулăр.**



## Примерсене шутлăр




## Омонимсем

Ана çинче ӳсет шурут,
Улăхра çӳрет шур ут.

Алăра ман çĕн тура,
Курăка хăвăрт тура.

Çулталăкра вун икĕ уйăх,
Тӳпере тăрать сар уйăх.

Урам алăкĕ яр уçă,
Ялти сывлăш епле уçă.

Аппа, эсĕ мĕн çĕлен?
Вăрманта шăвать çĕлен.

Пирĕн килте вунă хур,
Япалана вырăнне хур.

Пĕр купа япала çурăм,
Хытă ыратать ман çурăм.

**Алита ИГНАТЬЕВА.**
ЧР, Канаш районĕ,
Ешкилт.

## Пушă клеткăсене кирлĕ çаврака ӳкер



## Цифрограммăра – ваттисен сăмахĕ




***Катя КОШЕЛЕВА, Даша ЛУКИЯНОВА, Даша МИХАЙЛОВА*** (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) ***ĕçĕсем.***